# Ирĕксĕрлĕхре те хӳтлĕх кирлĕ ● 2 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн
30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

# Чăваш хĕрарăмĕ

20(838) №,
2014, çу,
24
Хакĕ
ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Выçă вилесрен... шыв ĕçсе çăлăнса юлнă. 2 стр.
Пасарĕ тулли – туянмалли çук. 3 стр.
Президент полкне пĕр ялтан икĕ каччă лекнĕ. 5 стр.
Арçын улталасан... 8 стр.
Кĕçех качча тухатăп: упăшка пулнă çынна... тепĕр хутчен. 9 стр.
Синкерпе вĕçленнĕ шăпа. 10 стр.
Юрăçшăн сасă мар, чĕре пĕлтерĕшлĕ. 11 стр.



4 стр.

## Чăвашла фильм ўкерме кам пулăшĕ?

Çак эрнере республикăра Пĕтĕм тĕнчери VII кинофестиваль кĕрлесе иртрĕ. Унăн президенчĕ Раççей халăх артисчĕ, «Мосфильм» киноконцернăн генеральнăй директорĕ Карен Шахназаров Шупашкара килсе çитрĕ. Пĕлтĕр те, малтанхи çулсенче те кĕтнĕччĕ ăна, анчах вăл патшалăх ĕçĕсене пула çула тухайман-мĕн. Вăйă кино конкурсĕн жюри председателĕ, РСФСР халăх артисчĕ Глеб Панфилов 80 çул тултарнине Чăваш Республикинче уявлани хăех кинофестиваль сумне ӳстерет. Вăл çак кунсенче Израиле гастроле кайма килĕшмен, «Ленком» театрăн ĕç графикне ятарласа улăштарнă. Унпа пĕрле мăшăрĕ, СССР халăх артистки Инна Чурикова конкурс фильмĕсене хак пачĕ. «Тĕнчери чи лайăх арçын», – тет ун пирки хĕрарăм кашни утăмрах. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Культура министерстви, Кинофестиваль дирекцийĕ юбиляра ăшшăн саламларĕç, ырлăх-сывлăх сунчĕç.

Ултă çулта фестивале Эльдар Рязанов, Ирина Муравьева, Лидия Федосеева-Шукшина, Михаил Ефремов, Ирина Скобцева-Бондарчук, Дмитрий Астрахан, Борис Грачевский, Алексей Герман-кĕçĕнни, Юрий Грымов, Сергей Фетисов, Никита Высоцкий, Алексей Нилов, Семен Фурман, Григорий Гладков, Елизавета Боярская, Дмитрий Харатьян тата ытти актерпа режиссер хутшăнчĕç. Раççей, Казахстан, Эстони, Грузи, Азербайджан, Беларуç, Серби, Аслă Британи, Франци, Болгари, Финлянди, Инди, АПШ кино индустрине аталантаракансем хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарни те халăх асĕнче юлчĕ.

Кăçалхи кинофестиваль те кинокăтартусемпе, пултарулăх тĕл пулăвĕсемпе, «çавра сĕтелсемпе», пресс-конференцисемпе пуян пулчĕ. Шупашкарта кăна мар, Хĕрлĕ Чутай тата Патăрьел районĕсенче те тӳлевсĕр фильмсем кăтартрĕç.

Çавнашкалах наци киностудийĕсен конкурс фильмĕсем куракансене тыткăнларĕç.

Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче *çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен «Хыпара»* 715 тенкĕ те 32 пуспа, *«Хыпар-шăмат куна»* 303 тенкĕ те 96 пуспа çырăнтараççĕ

*Ырă ăстан чулĕ те тимĕртен ирттернĕ.*

Каларăш.

### Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 24.05 | + 27 | + 14 |
| 25.05 | + 28 | + 18 |
| 26.05 | + 24 | + 18 |
| 27.05 | + 26 | + 14 |
| 28.05 | + 17 | + 11 |
| 29.05 | + 14 | + 10 |
| 30.05 | + 16 | + 6 |



“Хыпар” çемйин кăларăмĕсене çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен йӳнĕрех хакпа çырăнса юлăр. Уйăх вĕçлениччен “Чăваш хĕрарăмне” 312-24 тенкĕпе çырăнма пулать.



БРИФИНГ

# Ирĕксĕрлĕхре те хӳтлĕх кирлĕ

**Çын правине хӳтĕлесси – панхи кун чи çывĕч ыйту тесен те йăнăш мар. Украинăри лару-тăру çак шухăша çирĕплетет кăна. Хамăр патăмăрта та кулленех çын правнине пăснине асăрхатпăр. Çавăнпа та патшалăх шайĕнче ятарлă органсем йĕркеленине ырламалла кăна. Ачасен, ваттисемпе сусăрсен, хĕрарăмсен, ыттисен прависене общество та çине тăрсах хӳтĕлет-ха. Анчах та ирĕкрен хăтарнисен пирки калаçу пуçарсанах шухăш икке пайланать. «Преступниксем валли лайăх условисем туса укçа тăкакламалла мар, вĕсене унта курорта яман вĕт, хăйсем айăплă», – текенни уйрăмах тарăн тымар янă. Анчах тĕрме алăкĕ уçăлать, пирĕн çав çынсемпе пĕр обществăра пурăнма тивет-çке. «Тĕрмере кашни çын валли кирпĕч хурса хăварнă», – текен каларăш та манăçран тухман-ха. Юрăхсăр та начар условисенче чылай çул пурăннипе этем сăн-сăпатне пачах çухатма та пулать.**

Республика тĕрмисенче айăпа каçарттаракансен правине хӳтĕлессипе çыхăннă çивĕч ыйтусене çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче иртнĕ брифингра сӳтсе яврĕç. «Çавра сĕтеле» çын правине хӳтĕлекен уполномоченнăй Юрий Кручинин ертсе пычĕ. Унта массăллă информаци хатĕрĕсен ĕçченĕсемпе депутат корпусĕн, общество организацийĕсен, вăл шутра правăна хӳтĕлес енĕпе ĕçлекеннисем те, хутшăнчĕç.

Патшалăх органĕн çĕнĕ аппарачĕ йĕркеленнĕренпе çулталăк çеç иртрĕ. Явапла çак тивĕçе кӳлĕннĕ Юрий Кручинина республикăра тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекен евĕр пĕлеççĕ. Ирĕкрен хăтарнă çын-и е ахаль гражданин-и унăн правине пăснă тăк – хӳтĕлемелле. Çакнашкал çирĕп позицирен пăрăнмасать вăл. Уполномоченнăй аппаратне хăйĕн ĕçĕ-хĕлне тĕллевлĕ йĕркелесе пыракан тĕп тытăм тесе хаклама та пулать-тăр. Право хуралĕн ытти органĕсемпе пĕрле тачă çыхăнса ĕçлесен татах та ытларах ыйту татса пама пулĕччĕ те, анчах, конкуренцилĕх туйăмĕ кунта та хуçаланать-мĕн. Юрий Кручинин кăна хăй те асăрханă.

«Асăннă учреждениесенче лару-тăру çав териех начар теме çук, – палăртрĕ омбудсмен. – Ытти регионпа танлаштарсан лайăхрах та-и тен? Анчах та çапла çирĕплетме тăхтăттăм, мĕншĕн тесен иртнĕ тапхăрти тĕрĕслевсенче сахал мар çитменлĕх тупса палăртрăмăр. Тĕлĕнмелле те, уголовлă майпа айăпланманнисене хупса усракан изоляторсенче условисем тĕрмеринчен те япăхрах. Уйрăмах йывăр преступлени тунисем лайăхрах çĕрте пурăнаççĕ.

Улатăрти 8-мĕш колонире пулнă хыççăн хурлăхлă шухăшсем капланчĕç. Пурăнмалли корпус кивĕшнĕ... Кирпĕч шутлакансем ял хуçалăх, вылăх-чĕрлĕх тытнă ĕçсенче тăрăшаççĕ. Колони, шухăшласан, хăйне тытса тăмалăх ĕçлесе илет. Кунта вара сивĕтмĕш те çук, апат-çимĕç хутаççисене хĕлле чӳречерен çакса яма тивет...

Тепĕр учреждениере «тула» каймалли вырăна картламанни, унтах видеокамера вырнаçтарни те пуçа шăнăçаймасть.

Суицидран асăрханса çынсенчен кантра таврашне туртса илеççĕ-çке, хăш-пĕр çĕрте вара камерăра кашта карсах ялпала типĕтеççĕ...

Йĕплĕ пралук леш енчисене кун йĕркипе килĕшӳллĕн урама уçăлма кăлараççĕ. Картишсенче çумăртан хӳтĕлекен тăрă çукки те йĕркеллĕ мар.

Çынсем квалификациллĕ медицина пулăшăвĕ илеймеççĕ. Утса çӳрейменнисем пур. Чир классификацине пула госпитале хума ирĕк çук вĕсене. Халсăр ватăсем, чирлисем валли ятарлă колони усмалла, хăйсене хăйсем пăхайманнисене соцĕçченсем асăрхĕç», – Юрий Кручинин тата чылай тĕслĕх асăнчĕ, сăмахĕсене сăн ӳкерчĕксемпе çирĕплетрĕ. Лапсарти 1-мĕш, Шупашкарти 4-мĕш колонисенчи ристансен тăванĕсене кĕтмелли пӳлĕм те Юрий Сергеевича шалтах тĕлĕнтернĕ. Çынсен хутман, тирпейлемен сарай евĕр çуртра сехечĕ-сехечĕпе ларма тивнĕ-çке. Çивĕч калаçу хыççăн çак çитменлĕхсене пĕтерме май килнĕ. «Юлашки 20 çулта ку ыйту никама та канăçсăрлантарман-ши вара? Укçа тенкĕпе çыхăнман-çке вăл, йăлтах ертӳлĕх шухăш-кăмăлĕнчен килет», – палăртать омбудсмен. Çапах та колони общежитийĕсенчи йăла-йĕркепе коммуналлă, санитарипе гигиена условийĕсем халĕ те тивĕçлĕ шайра мар-мĕн. Çынсем нӳрĕ те сивĕ çĕрте сывлăха пĕтереççĕ.

Республикăри психиатри больницин стационар уйрăмĕн ятарлă пӳлĕмĕнче те çын правине ирĕклĕхне хĕсĕрленине тупса палăртнă. Пӳлĕм лаптăкĕ тивĕçтермет, вентиляци юсавлă мар, чӳречене кирпĕчпе купаласа хунăран çутă лайăх кĕмест. Çĕрле çынсем хупăлчасăр витрене «тула» кайнă... Кунта чирлисене асаплантарнă тесен те йăнăш мар. Çитменлĕхсемпе кĕрешес тесе уполномоченнăй пысăк инстанцисене çитнĕ, тинех хăшпĕр ыйту таталнă.

– Юлашки çулсенче депутатсем, влаç представителĕсем кайса курнă-и тĕрмесене? Унта ларакансем те пирĕн граждансем, пулас сасăлавçăсемех-çке. «Кирпĕч шутлакансене» суйлава хутшăнма ирĕк памалла, вара «халăх тарçисем» те вĕсен нушисене тинех асăрхĕç», – брифинга хутшăннисенчен пĕри çапла сĕннипе килĕшрĕ Юрий Кручинин. Сăмах май, шăпах пирĕн право хӳтĕлевçисем РФ Патшалăх Думине сĕнӳпе тухнă, вĕсем тĕрмере ларакансене те сасăлава хутшăнма ирĕк парас тĕлĕшпе конституцие улшăну кĕртме ыйтаççĕ.

«Тупса палăртнă материала халăх умне çитересси – маншăн чи шанчăклă хĕç-пăшал. Пĕлетĕп, пысăк должноç йышăнакансене килĕшмест çакă, анчах хирĕç-тăрулă лару-тăрура ĕçлеме хăнăхнă ĕнтĕ эпĕ», – общественноçа та хастартарах пулма чĕне вĕçлерĕ сăмахне Юрий Кручинин.

**Алина ИЗМАН.**

КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

# Хамăр хыççăн – ырă йĕр



Çĕнĕ Пăва – Кĕçĕн Пăла хĕрринчи чи илемлĕ те мухтавлă ялсенчен пĕри. «Харсăр çынсем никĕсленĕ селĕм ял хăй те сăвапла. Çав çынсен ратне тăсăмĕсем те калама çук ĕçчен, ытармалла мар кăмăллă...» – çырнă çур ĕмĕр ытларах каялла Çĕнĕ Пăвари музее никĕсленĕ учитель тата тавра пĕлӳçĕ Иван Горшков.

Музее йĕркелеме хăй вăхăтĕнче ялти библиотекарьте хĕрĕх çул ĕçленĕ Луиза Викторова нумай пулăшнă. Тахçанах тивĕçлĕ канура ĕнтĕ Луиза Витальевна, апла пулин те вăл тăтăшах музейре те, библиотекăра та пулать, вĕсенче çак тăрăхран тухнă паллă çынсемпе тĕл пулусем, тематика каçĕсем, ял культурине çĕклес тĕлĕшпе ытти мероприяти ирттерет.

Часах 75 çул тултаракан Луиза Витальевна хăй вăхăтĕнче «Республикăри чи лайăх библиотекарь» хисеплĕ ята икĕ хутчен, Чăваш АССР Аслă Канашĕн, ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн, Елчĕк район администрацийĕн тата ытти организаципе ведомствăн вун-вун наградине тивĕçнĕ.

**Петр ПУПИН,**
**ЧР тава тивĕçлĕ художникĕ.**
**Петр СИДОРОВ,**
**республикăри журналистсен Çемен Элкер ячĕллĕ преми лауреачĕ.**

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Кил ăшшине упракан



Оксана Григорьева Канаш районĕнчи Улаксарта пурăнать. Çут тĕнчене сусăр килни унăн калаçăвĕнче, ăс-хакăлĕнче пачах та палăрмасть. Пĕрремĕш ушкăн инвалиичĕн алли чиперех ĕçлет, ури çеç вăйсăр та хавшакрах. Çапах та пысăк та капмар кил-çурт вăтăртан каçнă черченкĕ çак хĕр пĕрчи çинче тытăнса тăрать. Кил, çемье ăшшине упраса пурăнать вăл. Хĕрарăмсăр кил-çурт илемĕ те çук тесе ахальтен каламаççĕ пуль çав. Оксанăн та пĕрмаях ĕç нумай. Ашшĕне шăллĕне апат пĕçерсе çитермелле, пӳрт-çурт тирпейлемелле. Пахча çимĕç лартассишĕн те, вылăх-чĕрлĕх пăхассишĕн те Оксана явапла. Паллах, килтисем кун пек чухне пулăшаççĕ, йывăр ĕçлеттерме тăрăшмаççĕ ăна.

### Ял-йышра – хисепре

Эпир çитнĕ чухне Оксанăн пӳрт умĕнчи хĕп-хĕрлĕ тюльпанĕсем куçа йăмăхтарса ларатчĕç. Пурнăçа юратакан ырă кăмăллă хĕр пĕрчи чечексем юратать. Чӳрече ани çинче, пахчара темĕн тĕрлине ӳстерет. Вĕсем çурăлсан тем пек хĕпĕртет. Вăррине, улмисене ятарласа Канаша кайса туянать.

Кӳрши-арши, ял-йыш маттур та тирпейлĕ, ырă кăмăллă, ĕçчен пулнишĕн хисеплет ăна. Çулсерен иртекен ял уявне кукăльсем, тортсем пĕçерсе тухать Оксана. Кондитера вĕренмесĕрех тутлă апат-çимĕç янтăлама ăста вăл.

### Юрату çинчен

Пиччĕшĕ Андрей çамрăклах çут тĕнчерен уйрăлса кайнă хыççăн Оксана вырăсларан чăвашла сăвă куçарнă. Кайран хăй çырса пăхма шухăшланă. Хаçатра пичетлесе каларни питĕ савăнтарнă ăна. Чăвашла та, вырăсла та сăвăсем шăрçалать халĕ Оксана, ытларах юрату çинчен хайлать. Каярах чăваш кăларăмĕсенче пичетлени пушшех хавхалантарнă пикене. Халĕ те пушă вăхăт тупăнсанах алла калемпе хут тытма васкать.

### Мал ĕмĕтлĕ пике

Пуян чун-чĕрелллĕскер ялти культура çуртĕнче иртекен пĕр концертран та, уявран та юлмасть. Çутă ĕмĕтсемпе пурăнать вăл. Пурнăçа та урăхларах, сывă çынсенчен хитререх, тата та илемлĕрех курать. Кичемленсе, тунсăхласа лармасть Оксана. Кăмăл сӳрĕкрех пулсан тӳрех пĕр-пĕр ĕçе пуçăнать те чун пусăрăнни тӳрех иртет. Çут çанталăкăн мĕн пур вăхăтне кăмăллать. Хĕлле лапка-лапка юр çуни, çуркунне вăрманта пĕрремĕш çеçпĕл шăтса тухни, çу кунĕсенче чечексем çурăлни, улма-çырла çитĕнни, чӳречерен сар çулçăллă кĕр кунĕ шаккани пикене хитре те илемлĕ пурăнма, çутă ĕмĕтсемпе хавхаланма хистеççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ШĂПА

# Телей пур иккен

Атте вăрçа тухса кайсан аннене пире çитĕнтерме йывăр пулнă. Эпир çемьере тăваттăн тăрса юлнă. Анне ĕçе кайсан асатте пăхнă пире. Эпĕ имшер те начар пулнă тет. Анне пĕрмай сахăр ярса чей ĕçтернĕ, эпĕ вара сивĕ шыв ыйтнă. «Ку çавах вилет», – тесе çывăх çыннăм чей вырăнне шыв панă мана. Кăштахран манран асли тата кĕçĕнни вилеççĕ. Эпĕ, начаркки, чĕрĕ юлнă. Халĕ те пурнатăп-ха. Нихăçан та больницăна кайман, эмел ĕçмен. Урапа алла амантсан кăна вырттăччĕ. Эпĕ 80 çула çывхаратăп, чĕре, ӳпке, юн пусăмĕ те йĕркеллех. Пурнăçра кулянмалли нумай пулнă. 24 çула çитсен качча тухрăм. Телей пулмарĕ. Çичĕ çултан хамăр кас ачипе пĕрлешрĕм. Ĕçчен те пултарулла, тăрăшулла măшăрччĕ вăл. Иксĕмĕр вицĕ ывăл çитĕнтертĕмĕр.

Чи асли – строитель. Тепĕр иккĕшĕ те ун çулĕпех кайрĕç. Ашшĕ ачасене пĕчĕккĕллех ĕçе хăнăхтарчĕ. Виççĕшĕ те çемьеллĕ. Кĕçĕнни Шупашкарта ĕçлет. Шел, ашшĕ ырă курса пурăнмалла чухне çĕре кĕчĕ.

Манăн халь сакăр мăнук. Эпĕ иккĕмĕш ывăлпа пурăнатăп. Виçĕ кин те лайăх манăн. Сивĕ сăмах каласа курман. Ывăлсем çуран çӳретмеççĕ, виççĕшĕ те машинăпа ярăнтараççĕ: Шупашкартан – Элĕке, Элĕкрен – Шупашкара... Телейлĕ эпĕ.

**Нина ЛАВРЕНТЬЕВА.**
Элĕк районĕ,
Шураç ялĕ.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Ача кулли тавралăха илем кÿтĕр

Марина ТУМАЛАНОВА

**Ашшĕ-амăшĕ ялан ачи-пăчи валли хатĕр-хĕтĕр шырать. Паллах, кашниех тĕпренчĕкне май пур таран хитререх тумлантарасшăн. Хамăр та пĕр лавккаран теприне чупса хăшкăлатпăр. Çывăхри суту-илÿ вырăнĕнчех туянăттăмăр, анчах нумай чухне унта юрăхлă çи-пуç та, пушмак та куç тĕлне пулмасть. Туянса пĕтернĕ те çĕннине илсе килеймен-мĕн. Е тата япала пахалăхĕ тивĕçтермест. Пĕрре 7-8 çулти ачасем валли 500 тенкĕлĕх 5 футболка илнĕччĕ. Йÿнни йÿнеçтерни мĕншĕн асран тухать-ши? Хайхискер çуса çаксанах тăсăлса кайрĕ, япалан тĕсĕ тухрĕ. Унашкаллине, паллах, урăх тăхăнаймăн. Çакăн хыççăн çĕннисене те çĕтĕке пăрахма лекрĕ. Çемье бюджетне перекетлени пулчĕ-и çакă?**

**Ача садĕнче те, шкулта та уявсене сумлă паллă тăвасси йăлара. Арçын ачана тумлантарма хулăн укçа кирлĕ мар. Хура костюмпа шурă кĕпе кирек хăçан та килĕшÿллĕ. Хĕр ача валли ялан çĕнĕ кĕпе илмелле. Пĕрре тăхăнассишĕнех сахалтан та 850 тенкĕ кăларса хума лекет. «Пур хитрене туянса пĕтерейместĕн...» – пĕтĕмлетĕ вулакансенчен хăшĕ-пĕри. Эпĕ те килĕшетĕп вĕсемпе. Анчах çынна тумтире кура кĕтсе илеççĕ. Ачасемшĕн пушшех çак чăнлăх тĕп вырăнта.**

**«Хальтерех илни те кивелмен. Ахалех шкапра вырăн йышăнса тăрать», – терĕм хĕрĕме эрешлĕ çи-пуçа кăларса тыттарнă май. Садике çитсенех тантăшĕсем сырса илчĕç ăна. «Эпир ку кĕпене курнă. Каллех çавна тăхăннă... Урăххине тупса илеймен-и? Маншăн вара атте-анне укçа шеллемест», – ачан кăмăлне пăсрĕç вĕсем. Çав вăхăтрах хăйсем пĕр чарăнми тĕкĕр умĕнче саркаланчĕç, пĕр-пĕрин тумтирне пахаларĕç. «Сăмсине шăлма пĕлмеççĕ...» – темшĕн çак шухăш кăна явăнчĕ пуçра. Хăшĕ-пĕрин ашшĕ-амăшĕ 2 миллион тенкĕ таран кредит илнĕ, апла пулин те тĕпренчĕкне ыттисенчен капăртарах тăхăнтартма тăрăшать. Çав шăпăрлансемех пуçтахланаççĕ, ыттисен тумтирне тиркеççĕ. Çук, вĕсене ÿпкелеме шухăш тытман. Çапах хитрелĕхе ытла юратни кивçене вăхăтра татма чăрмантармĕ-и?**

**Çуллахи пушмак шыраса хула пасарне çитрĕмĕр. Унта та ача-пăча хатĕр-хĕтĕрĕ патĕнче халăх хĕвĕшет анчах: пĕрне тытать, теприне хурать. 700-800 тенкĕрен йÿнĕреххи çийĕнчех юрăхсăра тухни никамшăн та кĕтменлĕх мар. Курттăмăн тăкакланас теменнисен эрнеренех пушмак улăштарма тивет – тĕпĕ çурăлнă е çĕтĕлнĕ сандалипе инçе каяймăн. Çитменнине, пахалăхсăрри ÿте начар витĕм кÿрет.**

**Кĕçех шăпăрлансем ача сачĕпе сыв пуллашĕç. Уява тахçанах хатĕрленме пуçланă ĕнтĕ. Куç тулли ывăлхĕр сăвă-юрă, ташă вĕренет. Ашшĕ-амăшĕ укçа пуçтарать. Хальлĕхе пухмача 5-шер пин тенкĕ хунă. Çак укçапа сăн ÿкерчĕк альбомĕ тăвăпăр, видео ÿкерĕпĕр, клоунсене чĕнĕпĕр, кафере хăналанăпăр, ачасемпе садик ĕçченĕсене парнепе хавхалантарăпăр... Пысăк ушкăнпа кану çуртне кайса килме сĕнекен те тупăнчĕ. Бассейнра ишессишĕнех 50-60 çыннăн çула тухма кирлех-и? Унта, кăмăл пулсан, çемьепе те кайса килме май пур.**

**Уяв кĕпи илме те укçа хатĕрлемелле. Сутуçăсем ăна 2 пин тенкĕпе сĕнеççĕ. Унсăр пуçне пушмак валли 1 пин кирлех. Ытти вак-тĕвек çинче чарăнса тăмăп. Парикмахерские те черет йышăннă. Çÿçе кăтралатса пуçтарнăшăн сахалтан та 500 тенкĕ ыйтаççĕ. «Тĕпренчĕксем ача сачĕпе пĕрре сыв пуллашаççĕ. Çак самант ĕмĕрлĕх асра юлтăр», – хыпкаланать ашшĕ-амăшĕ.**

**Паян парнепе те ачан кăмăлне тупма йывăр. Тахăшне суйламалла? «Кĕнекепе савăнтараймăн ăна», – çирĕплетеççĕ тĕпренчĕкĕн çывăх çыннисем. Çапла пуль çав – пепкин тавра курăмне анлăлатма ăнтăлакан ашшĕ-амăшĕ шкапри сентресене тĕрлĕ энциклопедипе тултарса лартнă. Пушă вăхăтра ил те вула... Анчах ачашăн вăйă кăсăклăрах. Тепĕр тесен, вăл та аталанма пулăшать. Конструктор илсе памалла мар-ши? Хакĕ «çыртать» те – пепкешĕн, чăн та, нимĕн те шел мар.**

**«Ачасене чи малтанах хăвăра шанса çурататăр», – «çавра сĕтеле» е канашлăва пуçтарăнсан аса илтереççĕ влаç çыннисем. Тĕрĕсех, вĕсене тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерессишĕнех темиçе ĕçе вырнаçма та, юлашки тенке тăкаклама та, пур йывăрлăха çĕнтерме те хатĕр ашшĕ-амăшĕ. Ача кулли тавралăха илем кÿтĕр! Çавăн чухне тин çывăх çыннисен чунĕнче канлĕх хуçаланать.**

АС ТĂВĂМ

# «Хыпар» никĕслевçине манмаççĕ

**«Хыпар» хаçат никĕслевçи Н.В.Никольский çуралнăранпа 136 çул çитрĕ. Çавна май çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Купăрля ялĕнче савăнăçлă уяв иртрĕ.**

Николай Васильевич Никольский /1878-1961 çç./ – истори ăслăлăхĕсен докторĕ, Хусан университечĕн, Хĕвел тухăç педагогика институчĕн профессорĕ. Чăваш тата Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхăн истори, этнографи, фольклор тата чĕлхе ыйтăвĕсене тĕпченĕ.

Мухтавлă ентешĕн палăкĕ умĕнче иртнĕ митингра район пуçлăхĕ И.Николаев, район администраци пуçлăхĕ Р.Тимофеев, Е.Ерагин тавра пĕлÿçĕ, Шупашкарти Н.В.Никольский ячĕллĕ педагогика колледжĕн директорĕ В.Сапожников тата ытти паллă та хисеплĕ çынсем сăмах каларĕç. «Историе манас марччĕ, ăна мансан çыннăн пуласлăхĕ çук», – терĕ Р.Н.Тимофеев. Вăл Николай Никольский Муркаш тăрăхĕн чи паллă çынни пулнине палăртрĕ.

«Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ А.П.Леонтьев Н.В.Никольский тăван халăхшăн пысăк та пархатарлă ĕçсем тунине асăнчĕ. Шупашкарти Пичет çурчĕ умĕнчи скверта унăн ячĕпе палăк лартма палăртнă. Ку пушă сăмах мар иккенне ĕçпе çирĕплетме шантарчĕ.

«Никольский йăхне тĕпчекенсем те пур-ха пирĕн хушăра», – терĕ Е.Ерагин тавра пĕлÿçĕ. Çĕр ĕç календарĕ паянхи кун та питĕ юрăхлă пулнине카ларĕ. Евгений Евстафьевич шухăшĕпе, Атăлпа Урал тăрăхĕнче чăвашлăхшăн çавăн пек тăрăшнă çын урăх çук та. Савăнăçлă çак самантпа усă курса вăл Н.В.Никольский ячĕллĕ педагогика колледжĕн директорне В.Сапожникова тата музей ертÿçине Т.Степановăна Николай Никольский ячĕллĕ медальпе чысларĕ.

Тухса калаçакансен хушшинче Николай Васильевич çывăх тăванĕ Н.Пантелеймонов та пулчĕ, «Хыпар» никĕслевçи пурнăçĕн юлашки çулĕсенче те ăслăлăх, тĕпчев ĕçĕсем çинчен нумай калаçнине асăнчĕ.

Уява пуçтарăннă ачасем палăк умĕнче хавхаланса сăвă вуларĕç.

Шкул директорĕ И.Федотов вĕренекенсем чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕн никĕслевçин çулĕпе кайма ĕмĕтленнине пĕлтерчĕ.



Николай Васильевич палăкĕ умне чечексем хучĕç.
Илемлĕ юрă-кĕвĕ шăрантаракансем уява малалла тăсрĕç.

**Лариса ПЕТРОВА.**
Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ.

ВĔРЕНӮ

# Экзаменсем тĕрĕс иртчĕр

Кăçал ППЭ тĕлĕшĕпе çĕнĕлĕх – экзамен тытакансен çумĕнчи тимĕр япалана ятарлă хатĕрĕпе тĕрĕслесси – кĕртнине эпир маларах пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Çĕнĕлĕхе экзаменсем тĕрĕс иртчĕр тесе хута янă. Аса илтеретпĕр, экзамен вăхăтĕнче телефон асăрхасанах çамрăкăн ĕçне йышăнмаççĕ. Çу уйăхĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарта ППЭ репетицийĕ иртнĕ. 10-мĕш шкула 300 çамрăк математикăпа экзамен тытма пухăннă. 20 минутра пурне те тĕрĕслесе кĕртнине шута илсен çĕнĕлĕх кăлтăксăрах хута кайнине çирĕплетме те юрать.

Çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче РФ Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев федераци субъекчĕн пуçлăхĕсемпе экзамен тавра калаçмашкăн видеоконференци мелĕпе канашлу ирттернĕ. Унта ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă.

Дмитрий Анатольевич ППЭ иртнĕ чух йĕркене пăснă тĕслĕхсем, вĕсене пĕтермешкĕн кăçал хута янă çĕнĕлĕхсем çинче чарăнса тăнă. Премьер Чăваш Енри лару-тăрупа та кăсăкланнă, ун çинчен республика ертÿçине каласа пама ыйтнă. Михаил Игнатьев ППЭне ачасем кăна мар, ашшĕ-амăшĕ те ырласа йышăннине пĕлтернĕ. «Пĕлĕве çĕнĕлле хаклама пуçланăранпа çамрăксен хушшинче çĕр-шывăн тĕрлĕ хулинчи аслă шкулсене вĕренме кĕрекен йышланнă. Экзаменсене тĕрĕс-тĕкел ирттерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Унсăр пуçне регионăн 150 сăнавçипе пĕрлех федерацин 40 тишкерÿçи те хутшăнмалла. Эпир экзаменсене ултавсăр ирттерес тĕллевлĕ», – палăртнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

**Алина ИЗМАН.**

# Малашлăх йыхравçи – шăнкăрав

Ĕнер тата паян республикăри шкулсенче вĕренÿ çулĕ вĕçленнĕ ятпа «Юлашки шăнкăрав» иртет. Кăçал 6,6 пин ытла /пĕлтĕр – 7,5 пин/ яшпа хĕр шкулпа сыв пуллашаççĕ, 11,8 пин ытла çамрăк 9-мĕш класран вĕренсе тухать. Вĕсене саламламашкăн, пурнăçăн такăр çулне сунмашкăн яланхи пекех учительсем, ашшĕ-амăшĕ, общественноç, влаç, организацисемпе предприяти представителĕсем килеççĕ.

Тунти кунтан çамрăксемшĕн хĕрÿ тапхăр пуçланать. Çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче – географипе вырăс литератури, 29-мĕшĕнче вырăс чĕлхи суйланисем Патшалăхăн пĕрлехи экзаменне тытаççĕ. Çĕртмен 2-мĕшĕнче – ют чĕлхепе, 5-мĕшĕнче математикăпа пĕлÿ шайне тĕрĕслĕç. 9-мĕшĕнче – информатика, биологи, истори, 11-мĕшĕнче общество пĕлĕвĕпе хими предмечĕсемпе ППЭ кĕтетет.

**Лиана ВАНИНА.**

ЧЫСЛАВ

# Чĕлхе сумне çĕклекенсене тав тунă

Иртнĕ кĕçнерни кун «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ» акцие хутшăнса «5», «5»-пе «4» хушшинчи паллă илнисене ЧР патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче чысланă, сертификатсем панă. Чи маттуррисене ЧР Пуçлăхĕн мăшăрĕ, республикăри Хĕрарăмсен канашĕн Ыр кăмăллăх фончĕн попечительство канашĕн ертÿçи Лариса Игнатьева, Вĕренÿ институчĕн ректорĕ Елизавета Казакова, сумлă ытти çынсем саламласа тав тунă.

Кăçал, ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче, 3100 ытла çын чăваш грамматики енĕпе пĕлĕвне тĕрĕсленĕ. Аудиторисенче 633 çын çырнă, ыттисем – наци радиовне итлесе. 136-шĕ «пиллĕке» тивĕçнĕ, 52-шĕ – «тăваттăпа» «пиллĕк» хушшинче.

**Анна ГЕРАСИМОВА.**

# Чăвашла фильм ÿкерме кам пулăшĕ?

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

## Самолет сирпĕнне хыççăн...

Тĕп конкурс программине кĕртнĕ 12 фильмран пĕрне – Арсений Гончукăн «Полет. Три дня после катастрофы» ĕçе – Олег Гиндис артист илсе килнĕ. «Çакнашкал курав йĕркелени пирĕншĕн ăмăр çанталăкра хĕвел тухнипе танах», – çирĕплетрĕç кино юратакан тивĕçлĕ канури хĕрарăмсем.

Кинотеатра йĕри-тавра пăхса çаврăнсан çакнашкал пĕтĕмлетÿ турăм: чылайăшне пĕлтĕр те курнă. СССР халăх артисткин Вера Кузьминан шухăш-кăмăлне пĕлес килчĕ. «Фестиваль вăхăтĕнче кăшт пушансанах кино курма çÿретĕп. Çакă тавра курăма анлăлатать», – тет вăл.

Аслă ăру çыннисем çамрăксене асăрхаттарса та илчĕç. Тĕслĕхрен, вăрçă çинчен кăтартакан фильмра ихĕлтетни, шавлани килĕшÿллĕ мар. «Юнлă çапăçу хирĕ Украинăри ларутăрăва куç умне кăларма хистерĕ», – палăртрĕç черчен чунлă хĕрарăмсем.

ЧПУ студенчĕсене те калаçăва явăçтартăм. Çамрăксем комеди жанрне килĕштернине пытармарĕç. Фестиваль вĕсен кăмăлне туллин тивĕçтернĕ.

«Полет. Три дня после катастрофы» фильма Пермьре ÿкернĕ. Салтакăн амăшĕпе йăмăкĕ авиакатастрофăра шар курнă. Сашăна кун çути кăтартнă хĕрарăмăн кун-çулĕ сывлăшрах татăлнă. Йăмăкĕн сывлас шанăç пур. Анчах ăна тухтăрсем вилĕм аллинчен туртса илеймеççĕ. Кам айăплă çакăншăн? Инкек пилот айăпĕпе сиксе тухнă иккен. Тăван тăрăха вăхăтлăх килнĕ Саша ăна хăй пĕлнĕ пек явап тыттарасшăн. Граната та хатĕрлесе хунă вăл. Анчах çав пилотăн хĕрне юратса пăрахни ăна йăнăш утăм тăвасран сыхласа хăварать.

## Телей шыраса

Кинофестиваль программине чăвашла фильмсем кĕртни те – çĕнĕлĕх. Çак вăхăт çитессе эпир тахçантанпах кĕтнĕ. Андрей Васильевăн «Нарспи» ĕçне сумлă жюри хак парĕ. Çак фильм кинофестиваль пуçланиччченех пысăк экран çине тухнине палăртса хăварас килет. Ăна куракансем хапăлласа йышăнни хăех нимрен хаклă. Ку ĕçе «Нарспи» мюзикл тăрăх ÿкернĕ. Тĕп сăнарсенче – Александра Казакова, Александр Васильев, Константин Москалев. Сăмах май, темиçе çĕр экземплярпа «Нарспи» видеодиск сутлăха тухрĕ. Андрей Васильев каланă тăрăх – фильма 45 кунра ÿкернĕ, 100 пин тенкĕ тăкакланă.

Журналистсемпе йĕркеленĕ тĕл пулура ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов чăвашла фильмсен шăпи çинче те чарăнса тăчĕ. Хамăр тăрăхри режиссерсем куракан патне çулсерен 10 ытла ĕç çитерме тăрăшаççĕ. Нумайăшĕн чăвашла çĕнĕ фильмсене пысăк экран çине кăларас шухăш çук – вĕсем услам тăвас шухăшпа çеç видеодисксем çыраççĕ. Çапах ЧР Культура министерствин чăвашла кино ÿкерес ĕçе аталантарма май пур-и? Вадим Петрович кашнинех грант çĕнсе илме пултарни пирки сăмах хускатрĕ. Анчах хальлĕхе никам та министерствăна проект тăратман. Тен, малашне лару-тăру лайăх енне улшăнĕ? Бюджет укçипе кино ÿкерме пуçласса шанас килет.

Кинофестиваль вăхăтĕнче электрон тата кинодокументаци патшалăх архивĕнче чăвашла фильмсемпе паллашма май килчĕ. Кино эрнине Вячеслав Ориновăн «Манăн та телейлĕ пулас килет» ĕçĕ уçрĕ. Залра халăхпа пĕрле режиссера тата артистсене курма ĕмĕтленнĕччĕ. Каласа кăтартмалли сахал-и вĕсен? Анчах çав кун «Хыпар» Издательство çурчĕн журналисчĕсем килнĕрен çеç экран çутăлчĕ. Курав залĕнче эпир тăваттăнччĕ. Ахăртнех, Карен Шахназаров çакăн çинчен тĕшмĕртмест те. «Кинофестиваль вăхăтĕнче курав залĕ лăк! тулни нимрен хаклă. Чăваш халăхĕ кинона çÿрет. Пирĕн çак шайран чакма та, куракансене çухатма та юрамасть», – тĕрĕ вăл пресс-конференцире.

«Манăн та телейлĕ пулас килет» фильма Чăваш наци телекуравĕпе кăтартнăччĕ. Ăна Борис Чындыковăн «Алăксем умĕнче» пьесине тĕпе хурса хатĕрленĕ. Драмăри тĕп сăнарсем пĕр подъездри тăххăрмĕш хутра пурăнаççĕ. Пурнăçа хитрелетсе кăтартманни кăмăла кайрĕ. Чăнах, нумайăшĕн шăпи çавнашкал çаврăнса тухма пултарать. Нина /Лидия Красова/ яла кайсан мăшăрĕ Гена /Василий Павлов/ япалисене пуçтарса килтен туха каять. Ăна арăмĕ юратмасть, тăван мар ывăлĕ Йонас /Петр Ермолаев/ хакламасть имĕш. Телей шыраса тĕлли-паллисĕр çÿрет-ши вăл? Гена малтанхи савнийĕпе те курнăçасшăн мар, киле те таврăнасшăн мар...

Çакăнта çавнашкалах «Чупкăн», «Франци хĕрĕ тыткăнлӑрĕ чĕрене» /Александр Степанов-Пăртта/, «Юхха» /Владимир Карсаков/ чăвашла фильмсем кăтартрĕç. Эх, вĕсене хамăрăн куракансем хак парасса кĕтнĕччĕ.

Фестивалĕн илемлĕх ертÿçи Сергей Лаврентьев электрон тата кинодокументаци архивĕн ĕçченĕсене ĕлĕкхи пленкăсене упраса хăварнăшăн тав турĕ. Çав ĕçсене «Кино касĕнче» курма май килчĕ.

Чăваш артисчĕсем те Раççейре, тĕнчере ят-сум çĕнсе илчĕç. Вĕсенчен пĕрипе – Анатолий Гущинпа – И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем тĕл пулу йĕркелеме палăртнă. Эпир те, журналистсем, ун валли ыйту хатĕрлерĕмĕр. Анчах ентеш тăван тăрăха килеймен. Унпа куçакуçăн калаçайманни, паллах, кăмăла хухрĕ.

## Александр Панкратовăн ĕмĕтри хĕрарăм сăнарĕ

«Мосфильм – 90 çул» ятарлă программăна кĕртнĕ фильмсене халăх юратса пăхрĕ. «Зимний вечер в Гаграх» ĕçе, сăмахран, 1985 çултанпа кăтартаççĕ. Ку хутĕнче те курав залне халăх нумай пуçтарăнчĕ. Чăваш наци библиотекин ĕçченĕпе Яна Горскаяпа тивĕçлĕ канури Надежда Баринова та юратнă фильма тепĕр хут курма пынă.

Раççей халăх артисчĕ Александр Панкратов-Черный кадра кĕмен самантсене аса илчĕ, хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа кăтартрĕ. СССР халăх артисчĕпе Евгений Евстигнеевпа пĕрле ĕçлеме май килнишĕн шăпана тав тăвать вăл. Юлташĕ Лондона операцие вĕçнĕ чухне те çак фильм дискне чăматана чиксе кайнă. Евгений Александровича каялла чĕрĕ-сывă таврăнма пÿрмен.

«Эпĕ Чулхулари театр училищинче вĕренеттĕм. Евгений Евстигнеева 1-мĕш курс студенчĕсемпе тĕл пулăва чĕннине пĕлсен калама çук савăнтăм. Вăл Чулхулана амăшне курма килнĕ иккен. Эпĕ, ялта çитĕннĕ 14 çулти ача, акт залĕнчи пĕрремĕш рете вырнаçса лартăм. Ун чухне «Битлс» ушкăн юррисем анлă сарăлнăччĕ, вĕсене евĕрлекен çамрăксем вăрăм çÿçлĕччĕ. Манăн та хула каччисенчен юлас килмен. Унччен те пулмарĕ, Евгений Евстигнеев сцена çине хăпарчĕ. Вăл сăмах илессе мĕнешкел кĕтнине хам кăна пĕлеттĕм. Çав самантра театр директорĕ Виталий Лепский ман енне çаврăнчĕ те залран тухма ыйтрĕ. «Çÿçна кас та кил», – терĕ хыçран. Куçран куççуль юхса анчĕ. Евгений Евстигнеев калаçнине коридорти алăк патĕнче 3 сехет çурă итлесе тăтăм. Унтан студентсем паллă артистпа сăн ÿкерĕнме пуçларĕç. Эпĕ, вăрăм çÿçлĕскер, малти ретре вырăн йышăннăшăн унран каçару ыйтма пырса тăтăм. «Лепский хире-хирĕçлĕхе юратмасть. Эсĕ – вăрăм çÿçлĕ, эпĕ – шакла. Иксĕмĕртен мана суйласа илчĕ те сана кăларса ячĕ вăл», – усăмлатрĕ хăна. Мана «Современник» театра спектакль пырса курмашкăн чĕнсе хăварчĕ. Мĕн тетĕр – хĕллехи каникул вăхăтĕнче юлташпа иксĕмĕр Мускава вĕçтерсе çитрĕмĕр. Евгений Александрович гримернăйран тухса курав залне кĕме хушрĕ», – ун çинчен сехечĕ-сехечĕпе каласа кăтартма хатĕр Александр Васильевич. Вĕсем «Мы из джаза» фильмра та пĕрле выляççĕ.

«Зимний вечер в Гаграх» фильм совет çар театр ансамблĕн солисчĕн тата степ шкул йĕркелÿçин Алексей Быстровăн пурнăçĕпе паллаштарать. Ăна Сталин хăй ура çине тăрса алă çупса хавхалантарнă, чикĕ леш енне тухса çÿреме ирĕк панă. Çав вăхăтрах мăшăрĕ те, хĕрĕ те ĕмĕрне «коммуналкăра» ирттернĕ Алексей Быстрова юлашки çула ăсатма та килмен. Кино куракансем тав çырăвĕсем яма пуçласан тин чиновниксен хăйсен шухăшне улăштарма лекнĕ.

СССР халăх артисткине Алла Пугачевăна та роль сĕннĕ. Сценарири хăш-пĕр вырăна шăпах унăн кăмăлне тĕпе хурса çырнине, тен, вулакансем пĕлмеççĕ те пулĕ. Анчах примадоннăна çак сăнар килĕшмен. Ун вырăнне РСФСР халăх артистки Людмила Гундарева вылянă. Кинори декораци те Алла Борисовнăн хваттерĕнчи интерьера аса илтерет. Александр Васильевич каланă тăрăх – çакăншăн юрăç кино ÿкерекенсене суда парасшăн пулнă, кайран тин шухăшне улăштарнă. Кинора та çавăн евĕрлĕрех самант пур. «Вăл тарăхса вăрçăнать те кайран çакăншăн ÿкĕнсе хаклă парне тыттарать», – ăнлантарать Людмила Гундарева сăнарĕ пирки костюмерша.

Малтан ку ĕçе чиновниксем виççĕмĕш категори фильмсен йышне кĕртнĕ. Пурин те пĕчĕк гонорарпа çырлахма тивнĕ.

***Хăна «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат корреспонденчĕн ыйтăвĕсене те хуравларĕ.***

**– Александр Васильевич, эсир мĕнле хĕрарăма тĕслĕх шайĕнче йышăнатăр?**

– Джокондăна. Ун майлине шырарăм-шырарăм, çавăнпа арăм нумай пулнă манăн. Аранах Юлия Владимировна Монахована тупрăм.

**– Çак фестиваль сирĕн пурнăçа çĕнĕлĕх кĕртрĕ-и?**

– Кинофестиваль, паллах, хавхалантарать. Халăхпа, çав йышра сирĕнпе те, курнăçма май пурри уйрăмах савăнтарать. Сцена çине тухсан халăх тимлĕ итлени килĕшет. «Кино юратакансене çаплипех кирлĕ-ха эпĕ», – тетĕп ăшра.

Александр Васильевич хулапа паллашнă, Атăл шывĕпе киленнĕ. Унăн шухăшĕпе, Шупашкарти Хĕрлĕ тÿрем – Нарспипе Сетнер юратăвне сăнламалли чи килĕшÿллĕ вырăн.

## Тепĕр çулччен...

«Узбекфильм» киностуди режиссерĕ Камара Камалова ачапăча кăмăлне лайăх пĕлет. 6-12 çулти тĕпренчĕксене «О том, чего не было», «Горькая ягода», «Наш внук работает в милиции», «Завтра выйдешь?», «Не забудь меня», «Чужое счастье» фильмсем пăхма сĕннĕ вăл. Ывăлăмпа хĕреме те кинотеатра илсе каясшăнччĕ. Анчах ача-пăча фильмĕсене 12 тата 14 сехетре кăтартрĕç. Çав вăхăтра шкулта урок вĕçленеймест. Тен, фестиваль йĕркелÿçисем çитес çул çакна шута илĕç? Камара Камалова та пирĕн тăрăха татах килме хирĕç мар.

Юлашкинчен кинофестиваль йĕркелÿçисене тĕрлĕ ÿсĕмри çынсен кăмăлне тупма пĕлнĕшĕн тав тăвас килет. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе çитес номерте паллаштарăпăр.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**











МАТТУРРИСЕМ

# Президент полкне пĕр ялтан икĕ каччă лекнĕ

**Çамрăксем çара каяççĕ. Урам тăрăх тутăр вĕлкĕштерсе салтак юрри шăрантараççĕ. Ах, çав салтак юрри! Мĕншĕн çав тери хурлăхлă-ши вăл, мĕншĕн чуна тивсе куççуль кăларать-ши? Ĕлĕкренех çăмăл пулман çав салтак шăпи. Тăван кĕтесрен, çывăх çынсенчен ĕмĕрлĕхе уйрăлса каятăн та урăхларах пулма майĕ те çук çав…**

## Салтак юрри шăрантарса

«Айĕнче, чĕнтĕрлĕ
кĕпер айĕнче
Чĕпĕллĕ кăвакал сасси пур.
Ялĕнче, Пуянкас ялĕнче
Хурлăхлă салтак сасси пур», – çак кунсенче Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Пуянкассинче салтак юрри янăранă. «Пирĕн тăрăхри йĕкĕтсемшĕн ламран-лама куçса пыракан йăла ку. Хăйсемех пĕр-пĕринчен вĕренеççĕ вĕсем, купăс калаканĕ те пур, Игорь Кузьмин вара питĕ нумай юрă пĕлет, – ăнлантарать ялти клубăн культорганизаторĕ Лариса Соловьева. – Ĕнер кăна Дима Федотов ячĕпе ăсату каçĕ йĕркелерĕмĕр. Çамрăксем карталанса çитсе кĕчĕç, вĕсене курма çынсем пуçтарăннăччĕ. Пулас салтаксене эпир те ал шăлли çыхса яратпăр, парне паратпăр. Унччен Станислав Игнатьев, Артем Антонов ялпа вăхăтлăха сыв пуллашрĕç. Пирĕн яшсем салтак атти тăхăниччен чăваш ташшипе савăнса юласшăн, çавăнпа та купăс сасси, наци юрри-кĕвви янăрать».



● АЛЕКСЕЙ ГУРЬЕВ.

Пĕлтĕр Шупашкар районĕнчи пĕр яла салтак ăсатма кайни аса килчĕ. Яшсем урам тăрăх карталанса утнине те курмарăм ун чух, тутăр вĕлкĕштерсе юрлани те илтĕнмерĕ. Ахаль ĕçкĕ тейĕн... Йăла-йĕркене манăçа кăларни питĕ пăшăрхантарнăччĕ.

Çĕнĕ Пуянкассисем унчченхи çулсенче театрализаци те кăтартнă. Çĕр-шыв умĕнчи арçын тивĕçне пурнăçлама хатĕрленекен Алексей Филиппова авалхи йăлапа салтака ăсатнă ял-йыш. Ӳлĕмрен те пулас хӳтĕлевçĕсене чыслăн ăсатасшăн, вĕсем йăхнесĕл, чăваш ятне ниçта та ан çĕртчĕр. Ку тĕлĕшпе Çĕнĕ Пуянкассисене пĕртте хурламалли çук, ашшĕ-амăшĕн пилĕ яшсене чи хастаррисен йышне кĕме пулăшатех. Ялтан харăсах икĕ каччă Президент полкĕнче службăра тăни çакна çирĕплетет мар-и? Пĕлтĕр кĕркунне унтан Алексей Гурьев таврăннă, çав тапхăрти призывпа Александр Сучков та элита чаçе лекнĕ. Паянхи кун вăл унта çар хĕсметĕнче тăрать.

## Ĕмĕт пурнăçланатех

Шкултан вĕренсе тухнă хыççăнах Алексей Мускава ĕçлеме çӳренĕ. «Манăн çав тери Кремль курас килетчĕ. «Тăван çĕр-шывăн тĕп хулинче пурăнатăп, хам вара çавăнта та çитейместĕп», – тесе тарăхаттăмччĕ. Шапашкăра чухне атте шăнкăравларĕ, мана Президент полкне йыхравланине пĕлтерчĕ. «Ку хисепе тивĕçĕпши?» – хăраса ӳкрĕм малтанах, кайран, лайăх шухăшларăм та, килĕшрĕм», – аса илчĕ йĕкĕт.

Алексей хурал ротинче тăнă, Кремль, Мавзолей, хупă аэропорт тата ытти объектсене сыхланă. Унпа пĕр ротăра чăваш тепĕр каччи Канаш районĕнчи Владимир Федотов хĕсметре тăнă.

«Тин килнĕ салтаксене чăнах та кӳрентермеççĕ-и?» – кăсăклантăм пĕлтĕр кăна салтак аттине хывнăскертен.

«Ун пекки пулман. Офицерсен хăйсенчен кĕçĕннисене кӳрентерес йăла çук, салтака хисеплеменни – тивĕççĕр.



● АЛЕКСАНДР СУЧКОВ АМĂШĔПЕ.

Дисциплина – тимĕртен çирĕп, командирăн кашни сăмахне итлемелле. Кун йĕркин кашни самантне шута илнĕ, эпир те ăна пăхăнса пурăннă».

Халĕ Çĕнĕ Пуянкасси каччи полици ретне тăма хатĕрленет. Ĕмĕчĕ пурнăçланасса шанать вăл. «Манăн сăмахсене çӳлтен такам йăлтах илтет тейĕн, халĕччен мĕн тĕв тунисем йăлтах пурнăçа кĕрсе пычĕç. Çавăнпа лайăххи те кирли çинчен кăна шухăшлама тăрăшатăп», – пытармасть Алексей. Салтакран таврăннă хыççăн вăл хăйĕн чаçне тепĕр хутчен çитсе курнă, ентешне Александр Сучкова присяга тытнă ятпа саламлама пынă. Тусĕ те çав ротăрах службăра тăрать иккен.

## Спорт пулăшнипе

Çĕнĕ Пуянкасси арçын ачисем мĕн пĕчĕкренех футболла выляса ӳсеççĕ. Вĕсене валли стадион пур, шкулта та ятарлă пӳлĕм уйăрса панă. 80-мĕш çулсенчех йĕркеленнĕ «Буяново» футбол командине çĕнĕрен чĕртес, вăййа аталантарас тĕлĕшпе тăрăшакансем тупăннине ырламалла кăна. Сăмахран, Александр Анастасьев предприниматель спортсменсене валли форма, тренирова костюмĕ, вратарь комплекчĕ, ытти япала туянса панă. Валерий Ильин тренер кунсеренех ачасене стадиона пухать, ăмăртусене илсе çӳрет. Алексейпе Саша та вăй-халне çавăнта пиçĕхтернĕ. «Çарта чухне футболсăр питĕ тунсăхларăм, унта мечĕк хăваласа чуптармастчĕç», – пытармасть яш. Кĕске дистанци, йĕлтĕрпе чупас енĕпе те вăл тĕрлĕ ăмăртура малти вырăнсене йышăннă. Сывă пурнăç йĕркипе, спортпа ачаранах туслă пурăнни ĕмĕр тăршшĕпех кирлĕ пуласса лайăх ăнланаççĕ кунти яшсем.

**Алина ИЗМАН.**

АЛ ĂСТИ

# Аллинче пин ĕç вылять

– Хĕллехи вăхăтра телевизор курнă чухне алă усса лараймастăп. Тĕрлесси çавăнтанах пуçланчĕ пулĕ. Ку хĕрарăм, ку арçын ĕçĕ тесе тиркешме юратмастăп. Тĕрĕ-эреш чуна лăплантарать, киленӳ кӳрет, – тет Улаксарта пурăнакан Вячеслав Александров. Ал ĕçне чи малтан пирĕштисенчен тытăннă арçын. Шурă простынь çине тĕрленĕ вĕсене. Кайран чӳрече каррисем çине куçнă. «Нумай çул çакăнса тăчĕç, йăлăхтарса çитерчĕç те ĕçе илсе кайрăм», – тет мăшăрĕ Людмила Софроновна. Вячеслав Геннадьевич тĕрĕ журналĕсем туянать, хăйне килĕшекен ӳкерчĕксене Интернетран та тупать. Унăн эрешĕсенче – паллă художниксен картинисем, турăшсем, чечексем, пейзаж... Çемьере икĕ хĕр пулнă май вĕсенчен хитре япала нумай юлнă. «Çĕтĕк тума шел, кивĕ гамашсемпе кофтăсене сӳтетпĕр. Канвапа рама çеç туянатпăр», – каласа кăтартать кил хуçи арăмĕ. Унсăр пуçне Вячеслав Александров тĕрлĕ шкатулка ăсталать, оригамипе кăсăкланать. Калем-кăранташ хумалли акăшсем хăйне майлă хитре. Çавăн пекех пушă вăхăтра хуçалăхра утă йăтма, пăру кăкарма вĕрен çыхать. Мĕн пур ĕçе чунĕ витĕр кăларакан ăстаçăран вĕренмелли, чăн та, нумай.



Кил хуçи тĕрĕсемпе кăсăкланать пулсан мăшăрĕ йывăç-чечек юратать. Темиçе тĕрлĕ пион, гладиолус, лили, кĕл чечек ӳстерет. Калчасене малтан пӳртре çитĕнтерет. Пахчинче таса та тирпейлĕ. Кунта иртен пуçласа каçчен тăрмашни сисĕнет. Чӳрече ани çинче тахçанах хăяр çитĕннĕ. «Чылайранпа çиетпĕр, паян хулана хутаççипех татса парса ятăм», – тет Людмила Софроновна.

Алли ылтăнах çав Вячеслав Геннадьевичăн. Пӳртри хальхи йышши шкапа та хăй ăсталанă. «Аттен те алли çыпăçуллăччĕ, ял çыннисене йĕкепе тивĕçтеретчĕ. Пур ĕçе те тĕплĕ, васкамасăр тума тăрăшатчĕ», – аса илет вăл.

Çемье чăмăртанă хыççăн Александровсен виçĕ çултан тин ача çуралнă. Нумай кĕтнĕ тĕпренчĕке савăннипе Рада ят хунă. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Шупашкарти педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн çемье çавăрнă вăл. Халĕ Питĕрте пурăнать. Ашшĕ пекех тĕрлеме юратать. Оля Шупашкарти 20-мĕш професси училищинчен повара вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарта администраторта, официантра тăрăшать. Пултаруллă хĕре ĕçри çитĕнӳсемшĕн темиçе хут та тав хучĕсене тивĕçнĕ.

Вячеслав Геннадьевич социаллă ĕçчен пулнă май ялти ватăсене пăхать. Людмила Софроновна Улаксарти фельдшерпа акушер пунктĕнче санитаркăра ĕçлет.

Çемьере лăпкăлăх, тăнăçлăх хуçаланать вĕсен. Çакă кил хуçинчен те нумай килет паллах. Пĕр-пĕрин сăмахне ăша хывнăран, чунтан хисепленĕрен пурнăçĕ те ăнса пырать унашкаллисен. Тирпейлĕ те ĕçчен пулнипе ял çыннисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ Александровсем. Илемлĕ те хитре пурăнма пĕлеççĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Канаш районĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Чăх какайĕпе купăста салачĕ

**500 грамм чăх какайĕ, 400 грамм купăста, 100 грамм сыр, 3 касăк çăкăр, майонез, тăвар кирлĕ.**

Пĕçернĕ чăх какайне тата çăкăра тăваткалласа касмалла. Купăстана вĕттĕн турамалла. Сыра теркăламалла. Çăкăра тип çупа ăшаламалла. Чăх какайне купăстапа, сырпа, çăкăрпа, майонезпа пăтратмалла.

### Сырпа, çăмартапа

**100 грамм сыр, 2 пан улми, пĕçернĕ 3 çăмарта, пуçлă 1 сухан, тăвар, майонез кирлĕ.**

Сухана çаврашкан касмалла. Пан улмипе сыра теркăламалла. Сухана вĕттĕн турамалла. Çимĕççене сиилесе /сухан – пан улми – сырпа çăмарта/ хумалла. Çиелтен майонез ямалла. Салата пăтратмасăр çимелле.

### Шăккалат кремĕ

**5 çăмарта сарри, 180 грамм сахăр çăнăхĕ, ванилин, 100 грамм шĕвĕ хăйма, 20 грамм шăккалат, 150 грамм услам çу кирлĕ.**

Çăмарта саррине сахăр çăнăхĕпе, ванилинпа, шĕвĕ хăймапа пăтратса пăс çинче çăраличчен пĕçермелле. Сивĕниччен шăккалатпа услам çу хушмалла.

### Лимон квасĕ

**3-4 лимон, 2-2,5 стакан сахăр, 5 литр шыв, 15-20 грамм çĕпре, исĕм кирлĕ.**

Вĕрекен шыва лимон сĕткенĕ ямалла, вăйсăр çулăм çинче хăмăрлатнă 1 стакан сахăр хушмалла. Çак хутăш 25-30 градус таран сивĕнсен çĕпрепе сахăр, исĕм хушмалла. Лимон квасне 5-6 сехет ăшă çĕрте, кайран сулхăн вырăнта йӳçĕтмелле.

### Мăйăр печенийĕ

**1/2 стакан сахăр, 1/2 стакан çăнăх, 5 апат кашăкĕ услам çу, 1/2 стакан мăйăр, 2 çăмарта, теркăланă 1 лимон хуппи, 1/4 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

Çăмартана услам çупа, сахăрпа, лимон хуппипе пăтратса кăпăклантармалла, çăнăхпа апат соди хушса чуста çăрмалла. Йĕтĕрлесе çаврашкасем касса кăлармалла. Çиелтен вĕтетнĕ мăйăр сапмалла. Печение 15 минутлăха сивĕтмĕше лартмалла, унтан духовкăра пĕçермелле.

### Лобио

**1 стакан шалча пăрçи, пуçлă 1 сухан, 2-3 апат кашăкĕ тип çу, теркăланă 3 апат кашăкĕ аçтăрхан мăйăрĕ, петрушка, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Шӳтернĕ шалча пăрçине пĕçермелле, сăрăхтарса сивĕтмелле. Шывăн пĕр пайне соус валли хăвармалла. Вĕттĕн туранă сухана ăшаламалла. Шалча пăрçине тип çупа, тăварпа, пăрăçпа, суханпа, петрушкăпа, аçтăрхан мăйăрĕпе пăтратмалла.

### Лимон хăпартăвĕ

**200 грамм çăра хăйма, 4 апат кашăкĕ çăнăх, 4 çăмарта, 100 грамм сахăр, теркăланă лимон хуппи, 1 чей кашăкĕ çу кирлĕ.**

Çăмарта шуррине пăтратса кăпăклантармалла. Хăймана çăнăхпа, сахăрпа хутăштарса кăштах пĕçермелле. Сивĕнсен çăмарта саррипе шурри, лимон хуппи хушмалла. Чустана çу сĕрнĕ çатмана ярса духовкăра пĕçермелле.

### Тăпăрчă икерчи

**200 грамм тăпăрчă, 1,5 стакан сĕт, 3 çăмарта, 8 апат кашăкĕ çăнăх, 6 апат кашăкĕ сахăр, чĕптĕм апат соди, тип çупа услам çу, тăвар кирлĕ.**

Çăмарта саррипе шуррине уйăрмалла, шуррине пăтратса кăпăклантармалла, сахăрăн çуррине хушмалла. Çăмарта саррине юлашки сахăрпа лăкамалла. Çăмартана тăпăрчăпа, сĕтпе, çăнăхпа, тăварпа, апат содипе хутăштарса чуста çăрмалла. Икерчĕ çатма тĕпне ан çыпăçтăр тесе 1 апат кашăкĕ тип çу ямалла. Пиçсен услам çу сĕрмелле.

## КАЙĂК-КĔШĔК

# Куç умĕнчех çитĕнеççĕ

**Хур-кăвакал ырăнне кăçал бройлер чĕпписем туянас терĕм. Анчах та питĕ нумай çиеççĕ теççĕ. Вĕсене мĕнле апатлантармалла-ши?**

**Н. АЛЕКСАНДРОВА.**
Çĕрпӳ районĕ.

Халь шăпах чĕпсем туянмалли вăхăт. Бройлер чĕпсем ахальлинчен ытлах уйрăлса тăмаççĕ, çав апатах çиеççĕ, нимĕн те тиркемеççĕ. Çавна май питĕ хăвăрт, куç умĕнчех çитĕнеççĕ. Вĕсем типĕ апат ытларах юратаççĕ. Ăна туянма та пулать, паллах, анчах килте авăртни йӳнĕрех ларать. Пĕр витре тулăпа икĕ витре урпаран лайăх апат пулать. Шыв çеç лартса памалла.



Чĕпсем тӳнĕ куккурус юратаççĕ. Пысăкланнăçемĕн пĕçернĕ çĕр улми, тулă, комбикорм, ешĕл утă çитерме юрать. Шĕвĕрĕлченрен ветеринари аптекинче эмел туянăр, ăна малтанхи кунсенчех парăр. Çывăрмашкăн чĕпсем валли витере типĕ кĕтес кирлĕ. Çавăнпа та пăчкă кĕрпи, утă е улăм сарса парăр.

Чĕпсем ир вăранаççĕ. Çавăнпа та апата каçах хатĕрлесе хурсан лайăхрах.

## ПСИХОЛОГ СĔНЕТ



# Арçын улталасан

*Арçын мĕншĕн «сулахаялла» чупать? Çак ыйту пур хĕрарăма та канăçсăрлантарать пулĕ. Сăлтавĕсене уçăмлатар-ха.*

1. Арăмĕпе хирĕçсе кайнă. Арçынсем – тĕлĕнмелле çынсем, вĕсемшĕн айккине кайса йăпанасси мăшăрĕпе мирлешнинчен чылай çăмăлрах.

2. Арăмĕн те çылăх пур. Хăй çав вăхăтрах айăпсăр пек курăнма тăрăшать. Ултав çинчен вăл хăех каласа кăтартнăха. Арçын çакна «апла тăк манăн та ирĕке тухма юрать» тесе йышăннă. Тĕрĕслĕх тени çĕр çинче пурах вĕт!

3. Арçын арăмĕнчен чипертереххине тĕл пулнă. Чăтса тăрайман. Хĕрӳ те илемлĕ хĕрарăма курсан пуç çухатаççĕ çав вĕсем.

4. Савăшу – ултав мар. Çапла шухăшлать упăшка, çавăнпа совеçĕ те асапланмасть.

5. Арçынна çĕнĕ туйăм çитмест, ăна вăл айккинче шырать. Тупать те. Улталанăшăн кулянать пулин те мăшăрĕ умĕнче чунне уçма хăюлăх çитереймест.

6. Арăмĕ нумай ĕçлет, упăшки, çемйи çинчен маннă.

7. Хĕрарăм виртуаллă тĕнчере пурăнать. Упăшкана телей кӳрес сехетсене вăл Интернетра ирттерет. Арçыннăн ирĕксĕрех чун йăпатмăшне айккинче шырама тивет.

8. Арçыннăн кăмăлне ирĕке ярас килет: мăшăрĕ унăн шухăш-ĕмĕтне вырăн çинче туллин пурнăçлаймасть. Тепринпе пачах урăхла лару-тăру, çавăнпа та еркĕн пек кăна пурăнма килĕшекен хĕрарăм туллиех халĕ.

9. Арăмĕ пысăк айăпа кĕнĕ тесе шухăшлать арçын. Вăл кӳреннĕ, ăнланулăха, йăпанăва урăххин ытамĕнче шырать. Çакăн хыççăн пурнăç та пит япăхах мар пек туйăнать ăна.

10. Арăмсăр пуçне тепĕр хĕрарăм килĕшет, иккĕшне те пĕр пекех юратать арçын. Унсăр та, кунсăр та пурăнайман чухне гарем пирки аса илетех вăл.

11. Куç курми пуличчен эрех ĕçсе лартнă та ирпе тепĕр хĕрарăмпа вăраннă. Мĕн туять-ши арçын? Намăс ăна, аван мар пек... Лайăх пулнă-ши çĕр каç? Ăна вăл ас тумасть те. Ан манăр, эрехсăра – çемье тăшманĕ.

12. Арçыннăн малтанхи арăмĕ е ĕлĕкхи савнийĕ пур. Вăл ăна манаймасть, çав вăхăтрах мăшăрне те çухатасшăн мар. Харăсах темиçе «фронтра» туйăма туптасси уншăн – чи меллĕ вариант. Арăмне йăлтах каласа парĕччĕ те, анчах ăнланулăх тупăнмĕ те хутшăну татăласран хăрать.

13. Ют хĕрарăмсем патне чупасси – арçын хоббийĕ. Ăна çут çанталăк парнеленĕ те унсăрăн вăл пурăнаймасть. Чун туртăмне арăмĕнчен пытарса вăл тивĕçлĕ еркĕн шырать.

14. Арçын хăй хакне хĕрарăмсен хисепĕпе тĕрĕслесшĕн. Мăшăрĕ чи лайăх хĕрарăм пулнине те пĕлет вăл. Çапах та теприсем арçыннăн хăй хаклăхне ӳстерме пулăшаççĕ.

15. Хĕрарăмăн ар хутшăнăвне кĕме чăрмантаракан чир пур. Сывă арçын вара савăшусăр пурăнайманнине такам та пĕлет.

***Упăшка ултавне хĕрарăмсем чĕре çывăхне йышăнаççĕ, тĕнче пĕтсе килнĕнех туяççĕ. Йывăр саманта чăтса ирттерме психолог канашĕ пулăшĕ.***

1. Малалла пурăнмалла! Хăваршăн мар тăк, сывăх çынсемшĕн. Вĕсене ырă кӳме тăрăшăр. Çын ыйтăвне татса панă хушăра хăвăрăн йывăрлăхсене манатăр, çакă чуна çăмăллăх кӳрет.

2. Хăвăра валли те вăхăт уйăрăр: макияж, маникюр-педикюр, лавкка тăрăх çӳресси, культура мероприятийĕ, ташă каçĕ... Çĕр çинче темĕнле кăсăклăх та пур, вĕсем сире кичемлĕхе парăнма памĕç.

3. Çывăх çынсемпе пĕрле пулма тăрăшăр. Калаçăр, шӳтлĕр, мĕн те пулин ĕçлĕр. Сирĕн тĕллев: ултавçă çинчен шухăшлама чарăнасси, чун ыратăвне пусарасси. Ан йĕрĕр, вăл сирĕн куççуле тивĕçлĕ мар.

4. Упăшкана каçармастăрах пулсан уйрăлмах тивет. Иккĕленсен тепĕр хут калаçса илĕр.

5. Урăх арçын тупăр. Ун патне çуралнă туйăмсем япăх кăмăл-туйăмран хăтăлма пулăшĕç.

6. Ытларах çывăрма тăрăшăр. Çакă та чуна сиплет. Ыйхă килмесен ятарлă препарат ĕçĕр.

7. Çĕнĕрен, «таса хутран», пурăнма пуçлăр. Пурнăçа хăвăр ĕмĕтленнĕ пек йĕркелĕр. Шухăшлани чăна çаврăнасса ĕненĕр.

8. Пултарулăх ĕçĕпе кăсăкланăр. Чун ыратăвне кăларса ямашкăн пулăшать вăл. Ку мел чылай çынна хăтарнă ĕнтĕ.

9. Пуçĕпех ĕçе парăнăр. Вăл темиçе тĕк – татах лайăхрах. Анчах та хăвăра упрамаллине те ан манăр. Вăй-хал чаксан кăмăл та пăсăлĕ.

## КАЛА-ХА, ТĔЛĔКĔМ



**Хĕрлĕ кĕл чечек** – савăнăçа, хĕрӳ юратăва,
**хĕрлĕ кĕл чечек çурални** – пурнăçра пылак самантпа киленме тивессе,
**хĕрлĕ кĕл чечек çуралма хатĕрленни** – çывăх вăхăтра туслă хутшăну йĕркеленессе,
**хĕрлĕ кĕл чечекпе çӳçе илемлетнине хĕр курсан** – юратури ултава, чун ыратăвне,
**хĕрлĕ кĕл чечеке касни** – мăшăрланма сĕнӳ кĕтмелле,
**хĕрлĕ кĕл чечекĕн тĕлĕнмелле илемлĕ тĕмми** – пысăк ĕмĕтпе шанăç пурнăçланасса,
**хĕрлĕ кĕл чечек çыххине çуркунне илсен** – пысăк савăнăçа, хĕлле тĕк – кăлăхах шанасса,
**кĕл чечеке шăршлани** – савăнăçлă кăмăл-туйăма,
**кĕл чечеке чӳлмеке лартни** – çĕнĕ савни тупма тивессе,
**шанă кĕл чечек** – савни пăрахасса,
**хура е сарă кĕл чечек** – уйрăлăва, ултава,
**шупка хĕрлĕ кĕл чечек** – вăхăта лайăх та усăллă ирттерессе,
**шурă кĕл чечек** – ертӳçĕ вырăн ăшăтма сĕннĕ май ăна хирĕçленине пула йывăрлăхсем тухасса,
**шупка /кремовый/ кĕл чечек** – ултавпа чеелĕхрен асăрханмалла,
**салтак тӳмми чечекĕ** – сирĕн çийĕн янкăр тӳпе хуçаланасса, пурнăçра çăмăл тапхăр пуçланасса,
**çаран çинче ӳсекен салтак тӳмми чечекĕ** – пуçланă ĕç ăнăçлă вĕçленессе пĕлтерет.



### ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА



# Манаймарăм

Вăл каçхине çумăр çăватчĕ. Эсĕ ыран-паян салтака каяссине пĕлсех урама тухмарăм. Вăтанаттăм санран. Пĕрле вĕренекен вун пĕрмĕшсен хушшинче каччăпа çÿрекен урăх никам та çукчĕ. Учительсенчен ят илтесрен те хăраттăм. Ватă йăмра айĕнче вăрахчен кĕтсе тăтăн. Эпĕ çав вăхăтра сана кантăкран вăрттăн сăнарăм. Аллунти шурă чечек çыххине тарăхса кÿлленчĕке пăрахмарăн, картаран тытăнтарса хăвартăн. Эпĕ ирхине вăраннă çĕре анне ăна сĕтел çине лартса хума ĕлкĕрнĕччĕ. Мана пырса çепĕççĕн ыталарĕ те: «Ан кÿрентер, ачи лайăхскер, ăсатса яр ĕнтĕ», – терĕ çывăх çыннăм.

Анне каланине итлерĕм. Тепĕр кун хĕрсемпе салтак ăсатма кайрăмăр. Питĕ салхуллăччĕ эсĕ. Сăну та шуранкаччĕ. Салтак юрри юрланă чухне ик куçунтан куççуль те тухрĕ. «Сăмах пар кĕтсе илме, юратăвăм. Çыр, аякра сан хыпартан хаклăраххи нимĕн те пулмĕ», – терĕн те тутамран ăшшăн чуп турăн.

– Çăкăру юлчĕ, çăкăру киле юлчĕ, – кăшкăрчĕç сан хыçăнтан ваттисем. Ку эсĕ тăван тăрăха тĕрĕс-тĕкел таврăнмаллине пĕлтерчĕ ĕнтĕ.

Германие лекрĕн. Малтанах эрнере икшер çыру та илеттĕм. Хĕр-тантăш ăмсанатчĕ, çав вăхăтрах пирĕн юратушăн савăнатчĕ те. Хитре шăрçалаттăн, минтер айĕнчи ăшăăшă çырусене темиçе хут та вуласа тухаттăм. Мана вĕсем экзаменсенче пушшех хавхалантаратчĕç. Икĕ çул пĕр сисĕнми иртсе кайрĕ. Салтакран таврăнма вăхăт та çитрĕ. «Текех çырмастăп. Мĕншĕн тесен çырăвĕнчен маларах хам çитетĕп. Кĕт, юратăвăм», – тесе çырнăччĕ эсĕ юлашкинчен. Йăмăку питĕ кĕтетчĕ сана. Тата миçе кун юлнине шутласах пыратчĕ.

Çуркуннеччĕ ун чухне. Çанталăк санпа сыв пуллашнă вăхăтри пекех калама çук хитречĕ. Çĕмĕртсемпе сиреньсем çеçкеречĕ. Шăпчăксем пĕр-пĕринпе ăмăртсах юрă шарантаратчĕç. Каç пулса килетчĕ. Кÿршĕ каçрĕ пирĕн пата. «Икĕ пуйăс хире-хирĕç пулнă хăрушă аварире Саша вилнĕ теççĕ», – терĕ те куçне тутăрĕпе шăлчĕ.

Çын сăмахне ĕненес килмерĕ. Йăран тунă çĕртен алла çумасăрах Сашăн йăмăкĕ патне вĕçтертĕм. Катьăн куçĕ шыçăннăччĕ. Ман ыйтусене пуçĕпе сулса çеç хуравларĕ. Нумай тытăнса тăмарăм, кÿлĕ хĕрне чупса антăм. Кунта никам та чăрмантаракан çук, шăплăха çурса кăшкăрсах йĕтĕм. Манпа пĕрле шурă хурăнсемпе симĕс тирексем те ĕсĕклерĕç. Киле тĕттĕмленсен çеç çитрĕм. Анне куçран пăхсах ăнланчĕ, нимех те чĕнмерĕ. Çав каç çиçĕм çиççех çумăр çурĕ, асар-писер çил йывăçсене хуçса пĕтерчĕ.

Вăхăт сиплет теççĕ. Унтанпа нумай çул иртрĕ пулин те эпĕ халĕ те пĕччен. Апла пурăнма юраманнине лайăх ăнланатăп. Сашăпа пĕрле хам юратăва та пытартăм пулĕ. Манаймарăм чун савнине. Ун хыççăн урăх никампа та калаçас килмерĕ.

Масар çинче лăпкă та шăп. Ун тăпри çинчи эпĕ лартнă шупка хĕрлĕ тюльпансем куçа йăмăхтараççĕ. Саша ман çине йăл кулса пăхать. Вăштăр çил вĕрсе илет те питрен, тутамран ачашшăн сĕртĕнет.

Çур çул каялла тĕлĕкре тĕллентĕн. «Çĕр çинче пĕрре пурăнатăн. Ан макăр. Савăн, юрат. Ывăл çурат та ман ята хур. Эпĕ сана çÿлтен яланах пулăшса тăрăп», – терĕн те çухалтăн.

Çав кунранпа темĕн пулса иртрĕ чунра. Утса мар, вĕçсе çÿретĕп халь. Сашăна манаймастăп пулин те салху та кичем кунсем аякра тăрса юлчĕç. Мана кÿршĕ ял ачи савать. Сăнĕпе малтанхи юратăва аса илтерекен каччă хама та килĕшет. Ĕнер вара Миша Сашăн çывăх тăванĕ пулнине пĕлтĕм...

**Елена ЛЕНСКАЯ.**

### КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Тинех ăс кĕчĕ

Манран телейлĕ хĕрарăм çĕр çинче çук та пулĕ. Эпĕ кĕçех качча тухатăп: упăшка пулнă çынна... тепĕр хутчен. Тăвансем пирĕншĕн хĕпĕртеççĕ çеç, тусăмсем вара мана ăнланмаççĕ. «Пĕрре пуснă кĕрепле çине тепĕр хутчен пырса кĕме кирлех-ши?» – тесе тĕрлĕрен сÿтсе яваççĕ. Хăшĕ-пĕри йăл кулăпа çиçекен сăн-питшĕн те ăмсанать-тăр... Калаçчăр-иç. Чи пĕлтерĕшли – мана Димăпа лайăх, эпир пĕр-пĕрне юрататпăр.

Çулталăка яхăн уйрăм пурăннă хыççăн тин туйса илтĕмĕр çакна. Тĕрлĕ çĕрте пурăнни пире çĕнĕрен çывăхланма, тата хĕрÿллĕрех юратма пулăшрĕ. Дима та, эпĕ те халĕ пачах урăх çынсем тейĕн. Этем улшăнмасть тесе кăлăхах калаççĕ иккен. Вăхăт иртнĕçемĕн кăна пуçа ăс кĕрет çав. Пирĕншĕн халĕ пурнăç хаклăхĕсем тĕпренех ылмашăнчĕç.

Пĕрремĕш хут çемье çавăрнă хыççăн çичĕ çултан уйрăлтămăр. Сăлтавĕ – кăмăлсем çураçайманни. Айванлăх мар-и вара çакă? Пирĕн хушша-хуппа виççĕмĕш кĕмен, упăшка ĕçкĕç мар... Иксĕмĕр те, шăрпăк тивертнĕ пекех, питĕ хăвăрт чĕрĕлсе каяттăмăр çав: вактĕвекшĕн чăркăшма, чĕрре кĕме юрататтăмăр. Сăмах çине – сăмах. Акă тухрĕ те вăрçă-харçă. Нихăшĕ те чарăнма шухăшламарăмăр, пĕр-пĕрне темĕн те пĕр каласа хăртаттăмăр. Çавăн пек черетлĕ хирĕçÿ хыççăн суда çитрĕм, упăшкаран уйăрма ыйтрăм. Пĕрле пухнă мула пайларăмăр. Пĕрлешнĕ ятпа атте-анне хваттер парнеленĕччĕ, ăна сутса пĕрер пÿлĕмлĕ иккĕ туянтăмăр.

Хĕрÿленсе кайнă самантра хамăра тытса чарайманнипех йăлтах арканчĕ. Мăн кăмăллăх, курайманлăх хуçаланчĕ пирĕнпе ун чух. Ывăлăм иксĕмĕре те пĕр тан юратни пирки, эпир унăн чунне ĕмĕрлĕхе амантса хăварни пирки шухăшламарăмăр. Ачам салхуланчĕ, чĕмсĕрленчĕ. Вăл: «Аттене курас килет», – тени манăн чĕрене çĕçĕпе сĕрнĕн илтĕнетчĕ. Ашшĕне унпа кирек хăш самантра та тĕл пулма ирĕк патăм.

«Пĕрех пĕччен юлмăп. Çамрăк-ха, хитре сăн-питĕмпе, кĕлеткемпе кирек мĕнле арçын пуçне те çавăрăп», – шухăшлаттăм эпĕ. Тупма пулĕччĕ те, анчах вырăн ăшăтассисĕр пуçне арçынсене нимĕн те кирлĕ мар-çке. Йĕркеллисем авланнă ĕнтĕ. Ĕçкĕçсемпе, вак-тĕвекленекенсемпе çыхланас килмерĕ. Эпĕ хваттерлĕ хĕрарăм пулнине пĕлсен «чей ĕçме» кĕрсе тухас текенсем тупăнман мар. Ывăл умĕнче намăсланниспе никама та чĕнместĕм. Арçынсене пурне те Димăпа танлаштараттăм. Нихăшĕ те ăна çитеймен пек туйăнатчĕ.

Упăшка пулни тăрăшуллă арçынччĕ, шалăвне йăлтах паратчĕ, апат пĕçеретчĕ, урай çăватчĕ... Мĕн çитмерĕ-ши мана? Хальхи вăхăтра çавнашкал арçынна пăрахăçлама юрать-и вара?

Ывăлĕ патне кĕнĕрен эпир унпа час-часах курнăçаттăмăр. «Çак çĕр çинче сансăр пуçне никама та юратма пултараймастăп», – терĕ вăл пĕррехинче. Вăл мана халĕччен каламан сăмахсемпе тĕлĕнтерсех пăрахрĕ.

Димăпа еркĕнсем пек пурăнма тытăнтăмăр, пĕр-пĕрин патне хăнана çÿрерĕмĕр. Хăш-пĕр чухне вăл пирĕн патра çĕр каçма юлатчĕ. Çакăншăн ывăлăм пуринчен ытла савăнатчĕ. Нумаях пулмасть Дима мана качча тухма ыйтрĕ те эпĕ килĕшрĕм. Халĕ вăл мана хĕр çуратма ÿкĕтлет. Пытармастăп, хамăн та юратнă арçынран тепĕр пепке кун çути кăтартас килет.

Пулас упăшка манăн кăмăла йăлтах тивĕçтерме тăрăшать. Патша майри евĕрех пăхать вăл мана. Кашни сехетре «Сана юрататăп» тесе СМС ярать... Шухăшлатăп та тĕлĕнетĕп: юрать-ха, йăнăша тÿрлетмешкĕн шăпа пире шанăç пачĕ. Унсăрăн çакăн пек арçынна çухатма, çак телее курмасан та пултарнă вĕт-ха эпĕ.

**МАРИНА.**



### АХ, АНЧАХ...

# Тупă пÿрни – эпĕ мар

Эсĕ мана манса кайнă пуль тенĕччĕ. Çук, каллех шăнкăравлатăн. Çепĕç çырăвусемпе пуçăма çавăратăн. Тĕлĕкре те пĕр манпа аташатăн-мĕн.

...Юр ирĕлме кăна тытăннăччĕ-ха ун чухне. Мана, сирĕн тăрăха ĕçпе пынăскерне, аслă çулран аякра пулнăран кĕтсе илтĕн. Кунĕпех пĕрле çÿренĕ хыççăн ăсатса ятăн. Сан чĕрере вĕри туйăмсем вăранасси пирки шухăшлама та пултарайман эпĕ. Нимĕнле сăлтав та памарăм-çке. Куçунтан йăл кулса пăхмарăм, ытлашши пĕр сăмах та хушмарăм. Пĕр вĕçĕм ĕç пирки кăна калаçрăмăр. Хулана çитсен те шăнкăравламарăм.

Эсĕ пачах канăçна çухатнă. Халь тин кăна ăнланса илтĕм çакна. Манпа кăнтăра канма каяс шухăш тытни ниепле те пуçăма вырнаçаймасть. Вăрттăнлăх хăçан та пулсан çиеле тухасран та хăрамастăн-и? Чунра юрату хĕмленни питĕ аван. Уншăн савăнмалла кăна. Вăл пурăнма хавхалантарать, çунат, çĕнĕ вăй хушать, çÿл тÿпене çĕклентерет. Анчах та... Санăн мăшăр пур-çке. Вăхăтлăх савни пулас килмест манăн. Çын çемйине нихăçан та аркатассăм çук. Манăн та чĕре чултан мар. Килĕшетĕн, анчах та юратупа выляма кирлĕ маррине лайăх ăнланатăп. Санăн телейÿ, санăн çутă ăраскалу çавах пулаймастăп. Ăнлан мана, турă пÿрни эпĕ мар. Туссем пулса юлни саншăн та, маншăн та лайăххах пуль. Кăнтăра та каймăпăр. Яла кайса пахчара аннене çĕр улми çумласа пулăшни усăллăрах тесе шухăшлатăп. Ан кÿрен. Кайран уйрăлса пĕтеймесрен хăратăп. Эпĕ те сивĕ хĕрарăм мар. Пуçа çухатасла юратса пăрахăп та...

Эсĕ кашни ир шăнкăравласа ырă кун сунни, ман сывлăхпа, пурнăçпа кăсăкланни те çитет мана. Урăх нимĕн те кирлĕ мар.

Эсĕ те, эпĕ те вун çиччĕре мар халь тин. Тÿпере каçсерен çăлтăрсем шутлас, улăхра чечексем пуçтарса пĕр-пĕрне парнелес вăхăтсем тахçанах иртсе кайнă ĕнтĕ. Каялла нихăçан та таврăнас çук вĕсем. Çав çулсенчи пек çепĕç те таса юрату ниепле те пулма пултараймасть. Ăнлан, йывăççем те çулталăкра пĕр хутчен çеç çулçă кăлараççĕ. Туйăмсемпе выляса çемье аркатма, мăшăрна куççуль тăктарма кирлех-и?

Кирек хăш вăхăтра çыр, шăнкăравла. Анчах та санпа пĕрле пулаймастăп, çав вăхăтрах тĕксе те яраймастăп. Сана йывăр вăхăтра ăнланакан чи лайăх тусу пулма кăна хирĕç мар эпĕ.

**Елюк ШЕРЕПИ.**

### САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

**Эпĕ Николай ятлă. 40 çулта. Пĕрре те авланман. Ялта пурăнма килĕшекен, ĕçлеме ÿркенмен çирĕп кăмăллă чăваш хĕрĕпе паллашасшăн. Эрех-сăрапа иртĕхместĕп. Ача пурри чăрмав пулмĕ. Телефон номерĕ – редакцире.**



Иван МЕДВЕДЕВ

# Улăхри кăвак чечек

/Повеç сыпăкĕ/

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 13-19-мĕш номерсенче/.**

«Эх, Воронов, Воронов... – шухăшларĕ çак самантра полковник. – Пултарулă та малашлăхлă офицер чысне мĕншĕн варалама тăрăшатăн-ши эсĕ? Рота саншăн – чи çӳллĕ «мачча». Çӳлĕрех хăпарма, Ивашкин майора айккине пăрса хăварса вăл йышăнма тивĕçлĕ должноçа ярса илме ахалех тапаçланатăн. Сана хамăн çум тума эпĕ нихăçан та килĕшессĕм çук. Тата темиçе çул лăпкăн ĕçле те пенсие кай.

– Василий Николаевич, эпĕ лайăх ăнланатăп: курсантсен çакнашкал хăтланкаларăшĕ батальона чыс кӳмест, – терĕ Янтушкин полковник. – Анчах та генерала кун пирки пĕлтерер мар-ха. Ăнланатпăр: тăватă çул хушшинче курсантсем ывăнса çитнĕ, кĕçĕрлĕхе те пулин хăйсене ирĕккĕн туйма шухăшланă вĕсем. Çирĕмри йĕкĕтсене юн вылявĕ те аташтарать, вĕсем хăйсен хĕрĕсемпе сыв пуллашу каçне ирттереççĕ ĕнтĕ. Мĕн, хамăр курсант пулман-и? «Самоволкăна» чупман-и? Хулпуççисем çине çăлтăрлă пакунсем çаксан кăна ăса кĕме пуçларăмăр. Çапла мар-и вара, Василий Николаевич?

– Çапла! – тӳрленсе тăрса чыс пачĕ майор. – Пĕтĕмпех эсир каланă пек пулĕ, полковник юлташ!

– Çитменнине Атнашкин – манăн чи çывăх юлташăн, фронтра паттăррăн çапăçса пуçне хунă Эскеров комбатăн пĕртенпĕр ывăлĕ...

– Ăнлантăм сире, полковник юлташ! – училище дежурнăйĕ пуçне усса васкамасăр штаб еннелле утса кайрĕ.

* * *

– Атнашкин, сана училище пуçлăхĕ хăй патне чĕнет! – ирхи апат хыççăн казармăна кĕнĕ-кĕмен хыçран кăшкăрчĕ рота дежурнăйĕ.

«Самоволка» пирки Воронов майор тӳрех генерала пĕлтернĕ пулмалла, – йывăррăн утнă май шухăшларĕ Илюк. – Юлташсем офицер формине тăхăнса паян-ыран килĕсене отпуска саланĕç, пире вара, тăватсăмăра та, гауптвахтăна ăсатĕç. Намăс, питĕ намăс... Ман ӳсĕмре атте капитан пулнă, батальон ертсе пынă. Каçар, аттеçĕм, эпĕ сан пек пулаймарăм...»

Оборона министерствин Мускавран килнĕ представителĕ тенкел çине ларма сĕнчĕ, хăй юнашар вырнаçрĕ. Геннадий вăрçăра Эскеров-аслипе пĕр полкра çапăçнă.

Ăна Эскеров килĕшменнине пула академие вĕренме янă иккен. Генерал-лейтенант курсантпа унăн ашшĕн паттăрлăхĕ çинчен вăрах калаçса ларчĕ.

– Илья, пĕр лайăх сĕнӳ пур сан валли, – Атнашкин куçĕнчен ăшшăн тинкерчĕ корпус командирĕ. – Манăн адъютант Северов капитан батальон командирĕн çумне куçать. Ун вырăнне эпĕ сана хамăн адъютант пулма çирĕплетесшĕн. Тепĕр икĕ çултан Мускав çывăхĕнчи илемлĕ хулара чаплă хваттер илетĕн, хитре пикепе мăшăрланатăн...

– Генерал-лейтенант юлташ, сумлă тата пысăк должноç сĕннĕшĕн тавах сире, – васкамасăр калаçрĕ Атнашкин. – Анчах та эпĕ çар биографине пехота офицерĕн чи пирвайхи должноçĕнчен – взвод командирĕнчен – пуçласшăн. Манăн атте те малтан взвод командирĕ пулнă...

– Килĕшетĕп çак шухăшпа, – Илюк çине кăмăллăн пăхса илчĕ Прозоров. – Ман корпусра мотострелоксен взводне йышăнатăн, кайран – рота...

– Çук, эпĕ офицер биографине чи йывăр условисенче Инçет Хĕвел тухăç çар округĕнче пуçласшăн...

– Геннадий Васильевич, сирĕн сĕнĕвĕре йышăнмарĕ пулĕ ĕнтĕ Атнашкин? – ыйтрĕ курсант тухса кайсан çитсе кĕнĕ училище пуçлăхĕ.

– Ăçта унта? Яхăнне те ямарĕ... Тепĕр тесен, савăнатăп та уншăн. Пур енĕпе те ашшĕ евĕр пулма тăрăшать Илья. Эскеров комбатăн юнĕ чупать унра. Шăпах çакнашкал çамрăк командирсем çирĕплетеççĕ те ĕнтĕ офицерсен корпусне.

Хăйсене лейтенант званийĕ пани çинчен калакан хушăва хумханса итленĕ, офицер пакунĕсем, йăлтăркка кăвак ромбикпа диплом илнĕ, чĕркуççи çине ларса училище ялавĕпе сыв пуллашнă, плацпа юлашки хут стройпа утса кайнă хыççăн çамрăк лейтенантсем пĕр-пĕринпе кăмăллăн калаçса, ăшшăн кулкаласа чукун çул станцийĕ еннелле утрĕç. Хул пуççисем çине пĕчĕк çăлтăрсемлĕ ылтăн пакунсем çакнă мал ĕмĕтлĕ çамрăксенчен телейлĕреххи урăх никам та пулмарĕ пулĕ çак вăхăтра Урал таврашĕнчи илемлĕ хулара...

7.

Тарăн вар пуçĕнче, пысăках мар юхан шыв çыранĕнче ылханлă граната çĕре кисрентерсе сирпĕнсе Анна пурнăçне татнă хыççăн улăхри утмăл турат чечекĕсем вун сакăр хутчен çеçкене ларчĕç. Пин те тăхăр çĕр утмăл улттăмĕш çулхи çĕртме уйăхĕнче вĕсем тавралăха ытарайми илем кӳрсе каллех кăвак хĕмпе ялкăшма пуçларĕç. Пĕлтĕр Свердловскри аслă çар училищинчен вĕренсе тухсан Инçет хĕвел тухăç çар округĕнче хĕсмет биографине пуçланă, çак кунсенче тăван яла черетлĕ отпуска таврăннă çирĕм иккĕри Илья Атнашкин лейтенант тата унăн амăшĕн чи çывăх тантăшĕ пулнă Василиса Никонорова /упăшкин хушамачĕпе – Ермошкина/ çырма хĕрринчи юман хĕреслĕ пĕчĕк картана утмăл турат чечекĕсен çыххине тирпейлĕн хурса хăварчĕç те калаçнă май вартан васкамасăр утса хăпарчĕç. Вар тăррине çитсен вĕсем тăп чарăнса каялла çаврăнса тăчĕç.

– Çапларах пулнă иккен аннен пурнăçĕн юлашки саманчĕсем, – Васса аппăшĕ каласа панине итлесе пĕтерсен ассăн сывласа илчĕ офицерăн парад формине тăхăннă Илюк.

– Мĕн тăвăн, шăпи çапларах пулчĕши? – куççульне саппун вĕçĕпе шăлса илчĕ хĕрĕх пĕррери хĕрарăм.

– Пĕчĕк чух кукамупа кăна ӳсрĕн пулин те хăв тĕлленех офицера тухма пултартăн эсĕ. Санăн – пĕтĕмпех малашра. Юратнă хĕр пур-и-ха санăн?

– Чун саваканнине халĕччен тĕл пулаймарăм-ха.

– Эсĕ, аçу пекех илемлĕ те çӳллĕскер, чĕре йышăнакан хĕре тĕл пулатăнах.

– Кун пирки хам та ĕмĕтленсе пурăнатăп. Сана паян ялтах тĕл пулни çав тери аван пулчĕ-ха. Отпуска килсен Васса аппа качча тухнă яла кайса килетĕпех, аттепе аннен юлашки тĕл пулăвĕ çинчен ыйтса пĕлетĕпех тесе шухăшласа пурăнаттăм. Санăн хăвăн савнă йĕкĕтӳ те вăрçăра пуç хунă тенине илтнĕччĕ эпĕ...

– Çапла, Никандр фронтран таврăнаймарĕ, – хаш! сывласа илчĕ хĕрарăм. – Аннӳ вилнĕ çул аякри яла – фронтра пулнă йĕкĕте качча тухрăм. Вăрçăра йывăр аманнăскер, виçĕ çултанах çĕре кĕчĕ вăл. Унран пĕчĕк хĕр ачапа тăрса юлтăм. Ачан шăпи ăраскаллă пултăрччĕ тесе яланах Турра кĕлĕ туса пурăнатăп.

Ăш пиллĕ калаçăва малалла тăснă май вĕсем васкамасăр ял еннелле утрĕç. Хăй хыççăн çăра тусан çĕклесе, вĕсене хирĕç пысăк хăвăртлăхпа ГАЗ-51 автомашина вирхĕнсе килчĕ. Автомашина чарăнчĕ те, ун кабининчен хурăн пек яштака пӳсиллĕ, кăвак тӳпе тĕсĕпе çиçекен чакăр куçлă, сарă çӳçне сулахай хулпуççи урлă ярса кăкăрĕ çине тураса вырттарнă илемлĕ хĕр тухса тăчĕ. Çӳллĕ те килĕшӳллĕ сăн-питлĕ, йăм хура çӳçлĕ çамрăк офицерăн хăмăр куçĕпе тĕл пулсанах вун çиччĕри пике вăтанса пуçне усрĕ, çаврака пичĕ пиçсе çитнĕ чие тĕслĕ ункăсемпе тĕрленчĕ. Ĕмĕтĕнчи юмахри пек чиперккене курсанах Илюкăн чун-чĕрине юрату туйăмĕсем ачашшăн çупăрларĕç.

– Сывлăх сунатăп сире, – терĕ лейтенант хĕр умĕнче ытлашши пăлханса кайнипе аллинчи карттусне каллĕ-маллĕ çавăркаланă май.

– Сире те сывлăх сунатăп, – ерипен пуçне çĕклесе хуравларĕ вăтанчăк хĕр.

– Мана Илюк тесе чĕнеççĕ, сире вара мĕнле ятпа хисеплемелле?

– Анна теççĕ...

– Анна?

– Илюк, ку манăн хĕр пулать ĕнтĕ, – терĕ Васса аппăшĕ. – Аннӳне хисеплесе, хĕрĕме Анна ятпа çыртартăм.

– Ăнлантăм... Питĕ илемлĕ хĕр ӳстерсе çитĕнтернĕ иккен эсĕ, Васса аппа.

– Хамăртан ытла мар ĕнтĕ. Çак кунсенче вăтам шкул пĕтерчĕ Анна. Паян упăшкан шăллĕне хăйĕн машинипе пирĕн яла колхоз ĕçĕпе янă та хĕрĕмпе пĕрле çуралнă кĕтесе килсе курас терĕмĕр. Каймалла ĕнтĕ, хĕвел анасси те нумаях юлмарĕ...

«Улăхри кăвак чечек пек илемлĕ хĕр тепĕр самантранах куçран çухалма пултарать, – мĕлтлетсе илчĕ Илюк пуçĕнче шухăш çиçĕмĕ. – Халĕ хамăн вĕри туйăмсене уçса памасан ку пикене нихăçан та тĕл пулаймăп. Манăн атте пекех хăюллă пулмалла. Вăл хăй юратнă хĕре тепĕр каччăна паман...»

– Васса аппа, кăштах тăхтăр-ха... – терĕ хăюсăррăн йĕкĕт. – Мана... мана хăвăн хĕрне качча паратăн-и?

– Сана-и?.. Кама-кама та, сана, Илюк, хĕрĕме пĕр сăмахсăрах качча паратăп. Хăй кăна килĕштĕр.

– Анне... – именчĕклĕн сăмах хушрĕ хĕр.

– Анна, Илюкăн ашшĕпе амăшĕ ăшă кăмăллă та сăпайлă çынсемччĕ, – ăнлантарчĕ ăна амăшĕ. – Улми йывăççинчен аякка ӳкмест теççĕ... Илюка качча тухма килĕш, хĕрĕм. Куншăн ӳкĕнмелле пулмĕ.

– Анна, манăн мăшăрăм пулсамччĕ, – хĕр умне хăюллăн утса пырса ăна кăвак чечек çыххине парнелерĕ Атнашкин. – Чăн та, хальлĕхе хулпуççи çинчи офицер пакунĕсемсĕр пуçне нимле тупрам та çук манăн...

– Пĕр-пĕрне юратса та хисеплесе пурăнсан çемьере тупра пухăнсах пырать, – калаçăва хутшăнчĕ хĕрарăм.

– Тепĕр хут ыйтатăп: манăн мăшăрăм пулма килĕшсемччĕ, Анна. Эпĕ сана нихăçан та кӳрентермĕп, – пикене çепĕççĕн пилĕкрен тытрĕ Илюк.

Чипер хĕр çамрăк офицер куçĕнчен ăшă хĕм сапса пăхса илчĕ те пĕр сăмах чĕнмесĕр пуçне унăн сарлака кăкăрĕ çине хучĕ. Çак вăхăтра уçă çил Аннăн сарă çӳçне Илюкăн пĕчĕк çăлтăрсемлĕ ылтăн пакунĕ çийĕн илемлĕн вĕлкĕштерсе сапаларĕ...

ПРЕМЬЕРА

# Синкерпе вĕçленнĕ шăпа

**96-мĕш сезон хупăниччен К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ черетлĕ премьерăпа савăнтарчĕ. Çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче Алексей Писемскин /вырăсларан чăвашла Юрий Сементер куçарнă/ «Синкерлĕ шăпа» драмине сцена çине кăларчĕç. Спектакль режиссерĕ – Наталия Сергеева.**

Пьесăри ĕçсем 19-мĕш ĕмĕрте, хресченсем улпутсене пăхăнса пурăннă вăхăтра, Кострома облаçĕнчи вырăс ялĕнче пулса иртеççĕ. Сюжечĕ ансат: çамрăк улпут Чеглов-Соковин /Арсений Димитриев/ хресчен хĕрарăмне Лисавие /Елизавета Хрисанова/ ача çураттарнă, лешĕн упăшки пуррине пăхса тăман. Лисавин упăшки Ананий Яковлев /Сергей Павлов/, суту-илӳпе аппаланаканскер, çулталăк ытла Питĕрте пурăннă хыççăн киле таврăнать. Арăмĕ ывăл çуратма ĕлкĕрнĕ те иккен. Лисави улпут пусмăрларĕ, çемьене тĕп тăвассипе хăратрĕ тесе тӳрре тухма пăхать малтанах. Мĕскĕн хĕрарăмсене пуянсем мăшкăлланă тĕслĕх сахал-и? Ананий арăмне каçарать, ачине те йышăнать. Çемйине Питĕре илсе каясшăн вăл. Анчах упăшки кил тăнăçлăхĕшĕн аякра ĕçлесе пурăннă вăхăтра Лисавин еркĕнĕпе юрату çуралнă-мĕн. Вĕсем пĕр-пĕринсĕр пурăнаймаççĕ, çавăнпа та улпут-хуçа хĕрарăма упăшкипе пĕрле аякка кăларса ярасшăн мар. Ĕç-пуç пысăк хуйăхпа вĕçленет: Ананий арăмĕн ачине вĕлерет.

Тĕп геройсенчен пĕри Лисави куракансен кăмăлне каймалли сăнар-и? Çакă та шухăша ячĕ. Вăл мĕншĕн упăшкине çав тери курайманнине ăнланма йывăр. «Эпĕ сана нихăçан та юратман, эсĕ мана вăйпа качча илтĕн. Хĕрлĕхе сана парнеличчен вăрманти вăрă-хураха парнелеттĕмччĕ пĕрех хут!» – тет вăл Анание. Ун чухнехи саманара хĕрарăм пулас мăшăрне савнипе савманнине ыйтса тăнă-и вара? Лисавие упăшки укçа та, парнесем те ярсах тăнă. Турă пилĕпе мăшăрланнăскер аякри хулара арăмне теприпе улталас шухăшпа çӳремен, мул çумне мул пухнă. Арăмĕ вара çулталăк та пурăнайман арçынсăр... Пурнăçа пĕччен ирттернĕ тăлăх арăмсем ĕмĕрĕн кашни тапхăрĕнчех пулнă-çке.

Улпут еркĕнне çаврăннă хĕрне амăшĕ Матĕрне /Нина Григорьева/ та ятлать, ку çеç те мар, «тамăкра çатма çинчи пек ăшталанмалла пултăрччĕ санăн» тесе ылханать. Çакăн хыççăн телей курас çук Лисави: ачине пытарма тивет унăн, улпут та сывалайми чирлĕ... Анание тĕрмене хупаççĕ, унтан вăл тухайĕ-ши? Арçын хăйĕн айăпне çăмăллатас темест, арăмĕ улпутпа явăçнине хĕнесен те йĕрке хуралçисем умĕнче уçса памасть. Лисави упăшки хăйне мĕн тери юратнине çавăн чухне тин ăнланса илет, ахальтен мар вăл ун умĕнче чĕркуçленсе уринчен уртăнать... Анчах хĕрарăм çăмăлттайлăхне пула Лисавин те, Ананин те шăписем синкерлĕ вĕçленеççĕ.

Пьесăна 1859 çулта çырнă пулин те вăл хальхи пурнăç çинчен пекех туйăнчĕ. Арçынсем ĕçлеме аякка тухса каяççĕ. Хамăр çуралнă тăрăхрах тĕпленме, ачапăчана мăшăрпа пĕрле ӳстерме тăрăшма тесшĕн пулнă автор.

Çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче драмтеатр «Икĕ туй» савăнăçлă каçпа сезона хупать, артистем гастроле каяççĕ. Пирĕн пата çитес эрнере Хусан сцена ăстисем килеççĕ.

**Алина ИЗМАН.**



# Юрăçшăн сасă мар, чĕре пĕлтерĕшлĕ



### Атте аннешĕн алла хĕç-пăшал тытнă

– Мускаврa çав вăхăтра каларăш çӳренĕ: "Шульженкăна турă асап ярса панă: пурин те – упăшка, унăн вара – Коралли". Атте питĕ вĕри, кĕвĕç çын пулнă, апат çисе ларнă çĕртех сĕтел çиттине туртса антарма пултарнă, – каласа кăтартать Клавдия Шульженко ывăлĕ Игорь Кемпер. – Аннен савнийĕ пулнă – Иван Григорьев сăвăç. Вĕсем пĕрлешме калаçса татăлнă, венчет çĕрри те тăхăнса çӳренĕ. Анчах аттепе тĕл пулни йăлт урăхла çавăрса хунă. Владимир Коралли эстрада артисчĕ пулнă. 1929 çулта вĕсем иккĕшĕ гастроле кайнă май пĕр пуйăса çакланнă. Атте аннене хавасла кăмăлĕпе тыткăнланă. Вăл пĕр чарăнми калаçнă, кулăшсем каласа кăтартнă. Атте сакăр çултанпах синагогăра юрланă, çула çитменскерех цирка хутшăннă. Унăн ĕçлеме тивнĕ – çемье пысăк пулнă. Аттен пиччĕшĕ-аппăшне халĕ те шутласа кăлараймастăп! Каярахпа вăл куплетсем юрлама пуçланă. "Иллюзионра" та çак енпех ĕçленĕ. Сăмах май, хушма ятне – Кораллие – атте император театрĕн балерининне илнĕ. Чăн хушамачĕ – Кемпер. Анне качча тухма хатĕрленнине пĕлсен, хăйне туя чĕнсен атте: "Пыратăп, анчах хăнана мар – авланма", – тенĕ. Атте сăмахĕ питĕ çирĕпчĕ. Каларĕ пулсан – пурнăçлать. Аннене çакă та килĕшнĕ. Харькова çитсен атте аннене тӳрех шыраса тупнă – лешĕ урампа Григорьевпа çавăтăнса утнă. Аллинче – чăматан. Анне вĕсене паллаштарнă. Хăйсем çула тухассине пĕлтернĕ. Атте вара унăн аллинчи чăматана туртса илнĕ, хирĕç-тăру сиксе тухнă. Унта атте çĕнтернĕ. Авланас каччă хыççăн вăл пистолетпа та чупнă – атте ăна граждан вăрçинченех сыхласа хăварнă. Çапла атте аннене качча илнĕ.

Эпĕ мĕн пĕчĕкрен манăн анне чаплă юрăç пулнине ĕненсе ӳснĕ. Каярахпа кăна унăн сасси опера юрăçин маррине ăнланса илтĕм. Вăл ытларах чĕрепе юрлатчĕ. Тепĕр тесен, ĕçĕ сасăра кăна мар. Анне комсомол, парти çинчен мар, юрату çинчен юрлатчĕ. Ку чĕлхене вара кашни ăнланать. Анне хăй вара юратуран хăрамастчĕ.

Пĕрремĕш юратăвĕпе, хайхи Григорьевпа, анне Харьков консерваторийĕнчех паллашнă. Çав вăхăталла чапа тухнă поэт аннене питех хакламан та. "Актриса пултарулăхĕ çук санра, – тенĕ ăна вăл. – Юрăçă та пит чаплах мар". Атте вара аннене аталанма пулăшнă. Чăнах та, вĕсен тĕл пулăвĕ аннешĕн шăпа парнипех танлашнă. Атте мăшăрне хăйне сцена çинче тыткалама вĕрентнĕ, репертуарпа пулăшнă, кирлĕ çынсемпе паллаштарнă. Шăпах атте пулăшнипе анне куракан юратакан Шульженко пулса тăнă...

Унăн пĕрремĕш пластинкисем 1935 çулта тухнă. Сцена çинче вара вăл 16 çултанпах юрланă. Тата икĕ çултан анне ячĕ Илья Жакăн "Андрюша" юррипе çĕршывĕпех кĕрленĕ.

Аттен ячĕ вара майĕпен сӳнсе, конкуренчĕсем вăйланса пынă. Çак вăхăтра кĕвĕçӳ те вăраннă – Илья Жак, авланнă пулин те, аннене килĕштернĕ. Вĕсен хутшăнăвĕ туслӑх чиккинчен иртмен пулин те атте тарăхăвне ниçта чикеймесĕр алла çĕçĕ тытни те пулнă.

### Вăрçă çулĕсем

Çулла гастрольсене тухса каяс умĕн мана е атте, е анне тăванĕсем патне Одессăна е Харькова ăсататчĕç. 1941 çулхи çĕртме уйăхĕнче эпĕ Харьковраччĕ. Аттепе анне вара вăрçă пуçланнă чухне Ереванта пулнă. Паллах, мана илмешкĕн вĕçтерсе пычĕç тӳрех – нимĕçсем ытла та хăвăрт çывхаратчĕç. Анчах та вокзалта халăх хĕвĕшетчĕ! Анăçран тухăçалла çул тытакан пуйăссен сывăхне пыма та май çукчĕ. Перрон çинче халăх хушшинче мана тытса пыраймарĕç вĕсем. Вакунри атте мана туртса кĕрес тесе чӳречене те çĕмĕрчĕ, анчах пуйăс тапранса кайрĕ... Атте-анне сăнĕсене курасчĕ сирĕн çак самантра! Юрать-ха Райкин та Кавказра пулнă, вăл Харьков урлă таврăнассине пĕлсен Аркадий Исаакович патне телеграмма янă вĕсем. Театрăн хăйĕн вакунĕ пулнине кура эпĕ Мускава чиперех çитрĕм. Çемйипех Ленинграда кайрăмăр. Блокада пирки кам тĕшмĕртнĕ-ха ун чух?

Эпир коммуналлă хваттерте улттăмĕш хваттерте пурăнаттăмăр. Нимĕçсем хула çине кунне темиçе хут та бомба пăрахатчĕç. Лифт ĕçлеместчĕ... Анне чăтаймарĕ, пире путвала куçарма ыйтрĕ. Сирена янăраса каймассерен тинех ултăмĕш хутран чупса анма пăрахрăмăр.

Выçă вилесрен вара Хĕрлĕ çар çурчĕн столовăйĕ çăлса хăварчĕ. Музыкантсене унта пăтă паратчĕç. Артистсене фронта çӳреме автобус уйăрнăччĕ. 1942 çулхи нарăс тĕлне вĕсене пулăсем йăлт шăтарса пĕтернĕччĕ. Çулĕ вара кĕскелсех пыратчĕ – нимĕçсем хулана унка çавăрса илсех пыратчĕç. Анне кăтса кĕнеха юрламан-тăр: пăр çинче, çĕр пӳртсенче, госпиталь палаткисенче... Малтанах вăл та ытти артист пекех гимнастерка тăхăннăччĕ. Анчах та аманнисем ăна хитре кĕпепех тухма ыйтнă – анне илемлĕ пулнине хăнăхнă вĕсем. Пĕррехинче вăл кĕпе тата духи тултартнă чăматанпа бомбăсем айне лекнĕ. Анне... япаласене хăйĕн кĕлеткипе хупласа выртнă – кирек мĕнле хĕрарăмшăн пекех уншăн та тумтир темрен те хаклăрах туйăннă çав самантра.

Кукаçи блокадăна чăтаймасăр 1942 çулхи нарăс уйăхĕнче вилсе кайрĕ. Çынсем вилнĕ тăванĕсене урама кăна тухса хуратчĕç – йĕркеллĕн пытарма май çукчĕ. Анне кирек мĕнле пулсан та тирпейлĕсе пытарма шухăшларĕ. Хĕрлĕ çар çурчĕн пуçлăхĕн пулăшăвĕпе усă курса тĕллевне пурнăçларех. Лешĕ ăна пĕр çăкăр тата кĕленче эрех тупса панă, шăтăк чавмашкăн икĕ салтак уйăрнă. Çăкăрне те, эрехне те анне вĕсене пачĕ – шăн çĕре чавма çăмăл марччĕ.

Ладога çывăхĕнчи Кобона станцийĕ асра юлнă. Пире унта кӳлĕ урлă тăтăш çӳремелле ан пултăр тесе çурт панăччĕ – аттепе анне эшелонсем умĕнче концерт кăтартатчĕç. Ăшăччĕ унта. Чи кирли – эпир унта чĕрĕ кушак куртăмăр! Ленинградра вара чĕрĕ пĕр кушак-йытă та юлманччĕ – выçăпа касăхнă çынсем йăлт тытса çисе янăччĕ.

Пĕррехинче станцирен виçĕ çухăмра вырнаçнă хамăра темиçе кунлăха уйăрса панă çурта таврăннă май тӳпере тăшман самолечĕсем курăнса кайрĕç. Автобусран чупса тухса çывăхри блиндажра пытантăмăр. Тӳпе йăлт хупланнăччĕ... Эпĕ 84 бомбардировщик шутласа кăлартăм. Вĕсем пурте эпир тин кăна пулнă Кобона çине çул тытрĕç... Унта çĕр чĕтреннĕн туйăнчĕ. Тавралăх шăплансан унта кайрăмăр. Йĕритавра йăлт çĕрпе хутăшнă – вакунсем, çынсем... Атте пулăшма чупрĕ. Каярахпа вĕсем чĕрĕ юлнисем валли концерт йĕркелерĕç. Анне "Синий платочек" юрларĕ...

Çак юрă малтан мирлĕ пулнă-ха. Вăрçă пуçлансан вара ăна темĕн тĕрлĕ те улăштарма пуçларĕç. Анне юрлакан вариантa çар хаçачĕн журналисчĕ Максимов лейтенант çырнă. Шăпах ăна салтаксем пĕр-пĕринчен çыра-çыра илетчĕç. Аннене те май пулсанах кăвак тутăр парнелеме тăрăшатчĕç.

1943 çулта мана çапах та Ленинградран аяккӑрах ăсатрĕç – эпĕ утаймиех пулса çитнĕччĕ ĕнтĕ. Мускаврa анне юлташĕпе "Мускав" хăна çуртĕнче правительство членĕсемпе пĕрле пурăнтăмăр. Сывлăх хăвăрт çирĕпленчĕ – мана ура çине тăратас тесе анне мĕн пуррине йăлт сутрĕ, пасарта сĕт юр-варĕ, пахча çимĕç, какай туянаттăмăр.

### Пĕрремĕшĕнчен тӳрех – тăваттăмĕшне

Кĕçех эпĕ шкула кайрăм – тăваттăмĕш класа. Вăрçă пуçланиччен эпĕ пĕрремĕш класа кăна çӳреме пуçланăччĕ. Каярахпа, атте-анне вĕçĕмех фронтра пулнине кура, иккĕмĕшне те, виççĕмĕшне те çӳремен.

Вăрçă хыççăн аттепе анне те Мускава куçрĕç. Пире лайăх хваттер пачĕç. Тинех пурнăç майлашăнма пуçларĕ. Малтанхи пекех анне антиквариат туянма пуçларĕ. Лидия Руслановăран хĕрлĕ йывăçран тунă диван илчĕ, Шостаковичран – рояль. Тумтир министрсемпе политбюро членĕсен арăмĕсене тăхăнтартакан Мускавĕпе паллă çĕвĕçе Ефимовăна саккас паратчĕ.

Кил тĕрĕшре пулăшакана кăна ним тусан та тара тытма килĕшместчĕ вăл – анне тасалăха питĕ юрататчĕ, ку енĕпе ăна никам та тивĕçтерместчĕ. Кукаçи те кулатчĕ унран: "Вилсен палăк лартса парĕç-ха сана, аллуна витрепе мунчала тыттарĕç", – тетчĕ.

### Хура пĕлĕтсем

Каярахпа вара анне пурнăçĕ хура пĕлĕтсемпе тулчĕ. 1956 çулта вĕсем аттепе уйрăлчĕç. Эпир икĕ пӳлĕмлĕ пĕчĕк хваттере куçрăмăр. Уйрăлăва иккĕшĕ те йывăррăн чăтса иртерчĕç. Анне çак вăхăтра аллă урлă каçнăччĕ ĕнтĕ. Шăпах çак вăхăтра пултарулăхĕнче те йывăр вăхăтсем пуçланчĕç. Ăна концертсене чĕнме пăрахрĕç, пластинкисене сутма чарчĕç. Анне пултарулăхĕ совет çыннисемшĕн юрăхсăр пулса тухрĕ. Ахăртнех, йăлтах Фурцевăпа харкашса илнинчен пуçланчĕ.

Анне влаç çыннисем умĕнче нихăçан та пуç пĕкмен. Культура министрĕпе Екатерина Фурцевăпа анне туслăччĕ-ха. Мускаврa çуллĕ çуртсем тума пуçласан Фурцева аннене унта хваттер памашкăн списока та кĕртнĕччĕ. Анчах та каярахпа тавлашу сиксе тухрĕ. Анне шăнкăравласа хăйне йышăнмашкăн ыйтнă. Фурцева палăртнă вăхăта çитнĕ анне, анчах тата икĕ сехет кĕтсе ларнă. Çав вăхăтра министр канашлура пулнă-мĕн. Унтан хăйĕн йышăнăвне пӳлĕмне шăнкăравланă. Шульженко кĕтсе ларнине пĕлсен: "Кĕттĕр!" – тенĕ. Анне ура çине çĕкленнĕ те: "Хуçăра калăр – вăл япăх воспитани илнĕ!" – тенĕ.

Çакăн хыççăн пуçланчĕ те. Паллах, пире нимĕнле хваттер те памарĕç. Ку çитмен, анне чи пĕчĕк виçеллĕ пенси илме пуçларĕ вăхăт çитсен.

### Çар юррисем пулăшнă

Нумай вăхăт иртсен кăна лару-тăрăва Брежнев улăштарчĕ. Новороссийск хулинче концерт пынă вăхăтра – унта вара çар юррисем янăранă – аннене аса илнĕ. Концерта Брежнев хуралĕпе пĕле çула тухрĕ вăл. Каярахпа банкетра Лещенко "Давай закурим" юрра тăсса янă, анне пĕрле юрлама пуçланă. Дуэт питĕ хитре пулса тухнă. Брежнев Шульженко патне пырса ыйтнă – нимĕн те кирлĕ мар-и? Анне пĕчĕк пенси тата хваттер пирки сăмах тапратнă – эпир ĕнтĕ пурĕ ултăн пурăнаттăмăр унта: манăн виçĕ хĕр çуралнăччĕ. Çакăн хыççăнах пире хваттерсем сĕнме пуçларĕç. Тӳрех иккĕ: аннене хăйне уйрăм, пире – хамăра. Эпир тӳрех куçрăмăр, анне вара малтанхинчех юлчĕ. Ниçта куçма та килĕшмерĕ.

### "Г.Е."

Тепĕр тесен, унта вăл пĕччен пурăнмарĕ. 1940 çултах çав арçынран пĕрремĕш хут чечек çыххи илнĕччĕ-ха вăл. Унтанпа 17 çул иртнĕ. Чăн та, чечексем килсех тăратчĕç. Пуринче те "Г.Е." тесе кăна паллă тунăччĕ. Вăрттăнлăх 1957 çулта çиеле тухнă. Анне ун чухне Мускав çывăхĕнчи санаторире каннăччĕ. Çавăнта паллаштарнă та ăна унпа – Георгий Епифанов документлă фильмсем ӳкернĕ. Анне çав вăхăтра 51 çултаччĕ, арçын – 39-та. Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче кун пек çыхăну пирки шухăшлама та хăйман.

Вĕсем пĕр-пĕрне тӳрех килĕштернĕ. Мускава таврăнсан анне патĕнче çĕр каçнă хыççăн: "Е тӳрех тухса кайăр, е пусĕпех юлăр", – тенĕ. Арçын юлнă. Сакăр çул телейлĕ пурăнчĕç вĕсем. Анчах та çулсем çапах та сисĕнетчĕç. Анне Георгие сăлтавсăрах кĕвĕçетчĕ. Паллах, арçын чăтса çитерейменрĕ. Çапах та вĕсем туслă çыхăнусене сыхласа хăварчĕç.

### Икĕ юлташ

Ĕмĕр вĕçĕнче анне кĕтмен çĕртен Пугачевăпа туслашрĕ. Вĕсем "Я возвращаю Ваш портрет" фильма ӳкернĕ чухне паллашнă иккен. Пугачева килес умĕн малтан шăнкăравласа асăрхаттаратчĕ. Анне вара мана тӳрех лавккана чуптаратчĕ – Аллăна паштета, Пугачева ăна питĕ килĕштеретчĕ, килти тесе ĕнентеретчĕ. Хыççăн хăна мăкăрлантарса яратчĕ. Пĕрер черкке коньяк ĕçме те хирĕç марччĕ вăл. Чăн та, ун чухнехи упăшки шăнкăравласанах, вăл ăна илме пыратчĕ, сигарет юлашкине тăрăшсах пытаратчĕ – лешĕ туртма ирĕк памастчĕ.

Алла анне патне нихăçан та пушă алăпа килместчĕ – е хаклă парнепе, е Францире кăларнă духипе савăнтаратчĕ. Пĕррехинче, шалу илнĕ хыççăн, анне патне килтĕм те енчĕке укçа хума тăтăм. Пăхатăп – унта малтанхинчен те ытларах. Пирĕн патра кам пулнине кăсăкланатăп. Алла. Анне укçана ăçта тытнине сăнаса вăл хăйне каламасăрах пĕчĕккĕн хурахура хăварнă-мĕн. Мĕн çинчен калаçнă икĕ çак хĕрарăм – пĕри ватăлнă ĕнтĕ, тепри вара çамрăк. Пĕр вăрттăнлăха кăна уçса пама пултаратăп /анне ăна пуринчен те пытаратчĕ/. Вăл Аллăран ыйтнă: "Эпĕ мĕн чухлĕ нота "илме" пултаратăп" тесе шухăшлатăн?" "Уй, нумай, Клавдия Ивановна!" – "Пурте çавăн пек шухăшлаççĕ, тĕрĕссипе вара – сахал. Хамăн юлашки нотăна нихăçан та "илместĕп" – сассăм питех вăйлах маррине çынсем ан сисчĕр. Чăн-чăн юрăçшăн, тепĕр тесен, сасă мар, чĕре пĕлтерĕшлĕрех..."

/«7 дней»/.




## ☺И-ХИ-ХИК☺

– Çакăнта сирĕн йĕкехӳре чупса çӳретчĕ-и?
– Йĕкехӳре мар вăл – такса!
– Пĕлместĕп, манăн кушак тытса çисе ячĕ, апла – йĕкехӳре…

* * *

Хĕрарăмсем пирки "этемлĕхĕн вăйсăр çурри теççĕ". Çапла пулмасăр! Мухмăрла пуçпа пĕр арçын та пулин тăрса яшка пĕçерни-не, ачана уçăлма илсе тухнине, хваттерте тирпейленине курнă-и эсир?

* * *

– Юрать, анчах та сана епле палласа илĕп-ха эпĕ?
– Эпĕ хура калпак тăхăнăп, манăн кĕлетке йывăрăшĕ 84 килограмм, çӳллĕш – 184.
– Калаçса татăлтăмăр. Эпĕ вара хура куртка тăхăнăп, тараса тата рулетка илĕп.

* * *

– Алло! Ку Чрезвычайлă ларутăру министерстви-и?
– Çапла.
– Мана тухма пулăшăр тархасшăн!
– Ăçтан?
– Интернетран.

* * *

– Калăр-ха, тархасшăн, манран хăй ирĕкĕпе тухса каякан арăмăн икĕ эрне ĕçлемеллех-и?

* * *

Травматологи уйрăмĕ Раççейре кăна 5-мĕш хутра вырнаçма пултарать…

* * *

Улталарĕç… "Çĕр çырли" текен супăнĕн шăршипе тути пĕр килмеççĕ.

* * *

Арçын хула администрацине пынă. Чиновник сĕтелĕ çине "Туртма юрамасть" тата "Взятка илместĕп" тесе çырнă хутсем вырнаçтарнă.
– Пĕр пӳлĕмлĕ хваттере приватизацилесшĕн, анчах та документсем çук, – тет арçын. – Мĕн тумалла-ши?
– Так, шухăшласа пăхар-ха, мăкăрлантарса ярар, – тет пӳлĕм хуçи "Туртма юрамасть" тесе çырнă хута айккинелле илсе хунă май.

* * *

Амăшĕ – ывăлне:
– Мĕншĕн çиместĕн вара эсĕ? Кашкăр пекех выçă терĕн вĕт?
– Выçă кашкăр кишĕр çинине ăçта курнă вара эсĕ?

* * *

– Ĕнер аппа патĕнче дачăра сăмакун тутантăмăр. Ирхине – çĕнĕрен çуралнă тейĕн…
– Мĕнле вара вăл?
– Купăста хушшинче тупнă мана!

* * *

Арăмĕ:
– Пире уйăрма ыйтатăп: упăшка килти пĕтĕм кастрюле сутса пĕтернĕ, укçине ĕçсе янă!
Упăшки:
– Эпĕ те пире уйăрма ыйтатăп: килте кастрюльсем юлманнине арăм эрнерен кăна асăрхарĕ!

* * *

Пиллĕкри арçын ача диван çинче хаçат вуласа выртакан ашшĕ патне пырать:
– Манăн чей ĕçес килет.
– Уй, ывăлăм, питĕ ывăнтăм паян, хăвах ту-ха.
– Аттеçĕм, тархасшăн…
– Юрать, атя çапла калаçса татăлатпăр: эсĕ ман валли чей тăватăн, эпĕ – сан валли.
– Атя.
Пилĕк минутран.
– Атте, сан валли чей хатĕр. Тăр.
– Ĕçес килни иртсе кайрĕ, ывăлăм, манăнне ĕçме пултаратăн.

* * *

Ялта пурăнакан хĕрарăм хулара ĕçлекен упăшки патне килнĕ.
– Шухăшларăм çав эсĕ анкăминкĕ арçын кăна тесе! Кур-ха мĕнле хваттер тара илнĕ вăл – пĕчĕкки çитмест, чӳречисем те çук! Мĕншĕн пурне те хăвна улталама ирĕк паратăн?
– Шăплан-ха, – чарать арçын. – Эпир хваттере çитмен. Ку – лифт.

* * *

– Акă сире пукан, акă мунчала.
– Мĕн тумалла вара манăн кунпа?
– Шăпăрт ларăр!

* * *

Пĕр астроном лекци вуласа тăранса пурăннă. Пĕррехинче, черетлĕ хут çула тухсан, хайхи мăкăртатса пырать:
– Йăлăхтарса çитерчĕ – кунсерен пĕр лекци вуласа çӳретĕп!
– Эпĕ вара руле пăркаласа йăлăхса çитрĕм, – тет унăн шоферĕ.
– Шухăшласа тупрăм! – тет лектор. – Атя вырăнсемпе улшăнатпăр: эсĕ ман вырăна лекци вула, эпĕ ăна йăлт хут çине çырнă. Ку хулара мана никам та палламасть.
Çапла калаçса татăлаççĕ те.
Шофер лекцие пĕр такăнмасăр вуласа парать. Ăна алă çупса тав тăваççĕ. Анчах… ыйту паракан тупăнать.
– Тĕрлĕ çăлтăр сирпĕннин концепцине вĕсен таппин расналăхĕпе тата диск евĕр модельсен йышĕ ӳссех пынипе çыхăнтарса мĕнле ăнлантарма пултаратăр?
Водитель пĕр самант ĕнсине хыçкаласа тăрать те:
– Эсир ытла та ансат ыйту пани тĕлĕнтерет мана. Ăна манăн шофер та хуравлама пултарать, – тет лешне чĕнсе илнĕ май.

* * *

Хĕр ача ашшĕнчен ыйтать:
– Атте, мĕн вăл – секс?
Лешĕ малтан хĕрелсе каять, унтан пичĕ çине шăпăр-шăпăр шултра тар тапса тухать. Хайхи тытăнать тĕпренчĕкне ăнлантарма, сăмахсене суйла-суйла калаçать, пăлханнипе такăнать…
– Атте, ăнланмалла каламастăн эсĕ, – мăкăртатать хĕр пĕрчи. – Секс вăл – ултă, севен – çиччĕ…



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

## ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Эпĕ 53 çулти арçын, хамăн юратăва тĕл пулса авланасшăн. Ялта ĕçлесе пурăнатăп. Хамăн çурт. Ман пата куçса килме килĕшекен хĕрарăмран шăнкăрав кĕтетĕп. Т. 8-902-234-40-25, скайп: jumansempattar11@yandex.com

## ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**7.Срубы** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89276689713.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru.**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т. 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**28.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. Т. 89370101054.

**29.Керамблок, кирпич.** Т. 378378.

**33.**Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу, щебень,** песок, **керамзит,** бетон, **чернозём,** навоз. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **трав для сенокоса** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**103.Керамблок, кирпич, кольца.** Качественные. Д-ка. Т. 21-36-80.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**134.Кирпич, керамблок.** Заводские цены. Д-ка манипул. Т. 447353.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

## ПРОДАЮ

**178.Цемент, гравмассу, песок.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

**238.Бетон, керамблоки, радиаторы.** Доставка. Тел. 67-14-22.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, **бой кирпича,** к/б блоки. Доставка. Т. 89051974019.

**317.Грамассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**340.Песок,** ОПГС, **щебень,** асфальтную крошку, **торф, навоз;** вывоз мусора. Почасовая работа. Тел.: 89061326378, 484161.

**341.Грамассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

**361.Песок, щебень, гравмассу** - от 5 до 30 тн. в короткие сроки. Недорого. Т.: 8-987-670-14-42, 8-917-678-71-66.

**362.Тёлку** – 1,4 месяца, **2-этажную дачу** в Кугесях. Т.: 8-937-012-67-12, 8-927-858-33-48.

## УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**115.Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80.
*Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**309.Срочно требуются мастера** отделочных работ. Соцпакет. Тел. 8-963-771-58-89.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор– тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – А.И.ИЗМАН

Золотой фонд прессы MMVIII

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 9298. Заказ 1857.